...Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ.

1953 çул Ноябрь 20 ЭРНЕКУН № 226 (9135) Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Хамăр республикăра (1 стр.).
Районсенчи парторганизацисен конференцийĕсем (2 стр.).
Парти вĕренĕвĕ Шупашкарта (2 стр.).
Б. Костров.—Çамрăксен йăла условийĕсене лайăхлатмалла (2 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Чăваш АССР-ĕнчи шкулсенчи учительсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен (2 стр.).
Парторганизаци Пленум решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешет. Çĕрпӳ машина-трактор станцийĕнче: **И. Семенов.**—Партилле-политикăлла ĕçе вăйлатассишĕн; **Д. Гурьев.**—Ĕçе лайăхлатмалли майсем (3 стр.).
Китайри гидротехника строительстви (4 стр.).
Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ (4 стр.).
Америкăпа Пакистан хушшинчи çар союзне хирĕç (4 стр.).
Францири «Комба» хаçат «Европа çарне» тăвассине хирĕç тăрать (4 стр.).
Кенири террор (4 стр.).
Кашни киле хаçат-журнал! (4 стр.).

Шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн

Шкулсенче кăçалхи вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш уйăхĕ вĕçленсе пырать. Çак хушăра нумай шкулсемпе учительсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Сăмахран, Шупашкарти хĕрачасен виççĕмĕш вăтам шкулĕнче ĕçлекен учительсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне хăпартас ĕçре чылай çитĕнӳсем турĕç. Ку шкулта, иртнĕ вĕренӳ çулĕпе танлаштарсан, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ нумай чакрĕ.

Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче нумай шкулсем ачасене теорилле пĕлӳсемпе пĕрлех пурнăçра кирлĕ практикăлла хăнăхусем парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлерĕç. Шкулсенче вĕренекенсемпе лабораторилле ĕçсем тăвасси, промышленность тата колхоз производствине экскурсисем туса иртересси лайăхланса пырать.

Анчах вĕренӳ çулĕн пуçламăш чĕрĕкĕн итогĕсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче халĕ те пысăк çитменлĕхсем пуррине, çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нумай шкулсемпе учительсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Чылай шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ çаплах йышлă-ха. Сăмахран, Çĕмĕрлери пĕрремĕш вăтам шкулта (директорĕ А. Соловьев юлташ) 516 çын вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть, ку пĕтĕм вĕренекенсенчен 30 процентĕ ытла пулать. Сĕнтĕрти вăтам шкулта (директорĕ А. Квасков юлташ) вĕренекенсенчен 33 процентĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть.

Вĕренекенсем хушшинче вырăс чĕлхипе тата математикăпа ĕлкĕрсе пырайманнисем нумай. Çакă вăл пуринчен малтан *учительсен вĕренӳ ĕçĕн пахалăхĕ çителĕксĕрринчен*, чылай учительсем хăйсен хисеплĕ ĕçне пĕтĕм тимлĕхпе туса пыманнинчен килет. Нумай учительсем кашни урокăн пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ, уроксене тĕплĕн хатĕрленмесĕр иртереççĕ, методика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ йăнăшсем тăваççĕ. Хăшпĕр учительсем, вĕренекенсене программăра кăтартнă çĕнĕ материала тĕплĕн калаçа ăнлантарса парас вырăнне, учебникре çырнине вуласа панипе тата ăна килте вулама хушнипех лăпланаççĕ. Çапла вĕсем вĕренӳ ĕçĕн пĕтĕм йывăрлăхне хăйсем çинчен сирсе вĕренекенсем çине тиеççĕ. Çак меслет, паллах, кирлĕсĕр, ăна пур майсемпе те пĕтерсе пымалла.

Шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне кунсерен хăпартса пырас тесен, кашни урокăн пахалăхĕшĕн, кашни урока идейăпа теори тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăмра [illegible] иртерессишĕн кĕрешмелле. Вĕренек[illegible]сем наукăсен никĕсĕсене урок[illegible] пыраççĕ, обществăри тата [illegible]лăхри пулăмсене тĕрĕс ăнлан[illegible] уроксенче вĕренеççĕ, уроксенче вĕсен коммунизмла мировоззренийĕ аталанать.

Шкулсенче вĕрентӳпе воспитание лайăхлатас ĕçре учительсен ĕçне шкул директорĕсемпе вĕренӳ пайĕсен заведующийĕсем кунсерен тĕрĕслесе, вĕсене вăхăтра кирлĕ пулăшу пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах ку ĕçе шкул руководителĕсенчен чылайăшĕ тимлĕн туса пымаççĕ. Çавна пула учительсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем уйăхран уйăха, çултан-çула тăсăлса пыраççĕ. вĕренӳ пахалăхĕ хăпарса пымасть. Шкул руководителĕ кашни учителĕн ĕçне кунсерен тĕрĕслесе тăмалла, ун ĕçĕнчи кашни çитменлĕхе вăхăтра палăртса çийĕнчех сирсе пымалла, ĕçри паха тĕслĕхсене палăртса, вĕсемпе мĕнпур учительсене паллаштармалла. Тепĕр енчен, шкул директорĕсен, вĕренӳ пайĕсен заведующийĕсен вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе учительсем паракан сĕнӳсене тивĕçлĕн хаклаçа, пурнăçлама тăрăшмалла. Вĕрентӳпе воспитани пахалăхне хăпартас ыйтусене час-часах педагогика совечĕсенче, учительсен производствăлла канашлăвĕсенче сӳтсе явас пулать. Анчах, хăшпĕр шкулсен руководителĕсем учительсен пуçарăвĕсене хакламаççĕ, критикăпа самокритикăна анлăн сарас вырăнне, аялтан пыракан критикăна хĕсеççĕ. Сăмахран, Именкассинчи вăтам шкул руководителĕсем А. Ивановна Х. Александров юлташсем хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса панине пăчах тӳсеймеççĕ, критикăпа пур майсемпе те хĕсме, чарса лартма тăрăшаççĕ. Ку шкул ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен, çитменлĕхсене пĕтерессе çинчен ирĕклĕн сӳтсе явни çук. Ахальтен мар ĕнтĕ шкул ĕçĕ ăнса пымасть, вĕренекенсен виççĕмĕш пайĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть.

Шкул руководителĕсен вĕрентӳпе воспитани пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе пĕтĕм учительсене пĕрлĕхлĕ, пĕр тĕллевпе ĕçлекен çирĕп коллектива пĕтĕçтерсе пымалла, çав коллектива тĕрĕс ертсе пымалла. Шкул дирекцийĕн парти, комсомол, профсоюз организацийĕсемпе тачăн çыхăнса ĕçлемелле. Шкулта единоначали пулни шкул ĕçне административла майпа кăна ертсе пымаллине пĕлтермест, единоначалие коллективлăх принципĕпе таччăн çыхăнтарса пымалла.

Шкулсем умĕнче çамрăк ăрăва коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çамрăксене тарăн та çирĕп пĕлӳсем памалла, çамрăксенче совет патриотизмĕн, пролетарилле интернационализмăн туйăмĕсене аталантармалла, вĕсене ĕçчен те тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентмелле. Шкулсен партин XIX-мĕш съезчĕ политехникăлла вĕренӳ енĕпе кăтартса панисене çирĕппĕн пурнăçласа пымалла, вĕренекенсене шкулта илнĕ пĕлӳсемпе пурнăçра усă курма *хăнăхтармалла*.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени шкул ĕçне малашне колхоз производствипе тата тачăрах çыхăнтарас задача кăларса тăратрĕ. Шкулсем çак пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыччăр тесен, вĕсене ĕçре пулăшса, ертсе пырассин шайне чылай хăпартмалла, çутĕç органĕсен ĕçне нумай лайăхлатмалла. Халлĕхе, тӳрех калас пулать, районсемпе хуласен çутĕç пайĕсем чылайăшĕ шкулсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсен ĕçне сахал тĕрĕслеççĕ, практикăлла пулăшу парса тăмаççĕ. Шкулсен ĕçне ертсе пырас тĕлĕшпе Чăваш АССР Çутĕç министерствинче те çитменлĕхсем нумай. Шкулсене ертсе пырас ĕçре çутĕç пайĕсен, Çутĕç министерствинче ĕçлекенсен ответлăхне хăпартни, ертсе пырас ĕçĕн шайне чылай ӳстерни кирлĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ республикăра халăха вĕрентес ĕçе малалла лайăхлатмалли майсене усăмлăн кăтартса пачĕ. çутĕç органĕсем, вырăнти Советсем умне ку тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çутĕç органĕсен, район, хула тата ял Совечĕсен Верховнăй Совет сессийĕ ку тĕлĕшпе йышăннă постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

Халăха вĕрентес ĕç, шкулсен ĕçĕ ăнăçлă пуласси ку ĕçе парти органĕсем тĕрĕс ертсе пынинчен килет. КПСС хула, район комитечĕсен шкулсене, çутĕç органĕсене ертсе пырассине лайăхлатмалла, вĕсен ĕçне тăташах тĕрĕслесе, вăхăтра пулăшу парса пымалла, шкулсенчи пуçламăш парторганизацисен рольне ӳстермелле.

КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа халăха вĕрентес ĕç работникĕсене шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма, социализмла обществăн культурăллă тата нумай вĕреннĕ гражданинĕсене, коммунизмăн активлă строителĕсене вĕрентсе хатĕрлеме чĕнчĕ. Партин Центральнăй Комитечĕн чĕнĕвне учительсем, çутĕç работникĕсем шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне тĕпренех лайăхлатса пынипе ответлĕç.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА



Рига. Латви ССР-ĕнчи Наукăсен академийĕн президенчĕ Я. В. Пейве профессор колхозсемпе МТС-сем валли вырăнтан вырăна куçарса çӳремелли лаборатори тунă. Лабораторири реактивсемпе тата приборсемпе тăпрана 200 тĕрлĕ анализ туса пăхма пулать. Кун пек лабораторисене республикăри колхозсене ярса панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: почвоведенипе çĕрĕç *институтĕнчи старши лаборант* Гунар Риньких лаборатори валли мĕн кирлине хатĕрлет.

Е. ЯСЕНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Автоматла станок

Ялхуçалăх машиностроенийĕн Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институтĕнче çĕрнĕ тислĕкпе торф чӳлмекĕсем туса хатĕрлемелли «ИГ-9» станок-автомат тунă. Станок тăпрапа удобренисене кирлĕ чухлĕ виççе илет, вĕсене хутăштарать, формăлать те туса хатĕрленĕ чӳлмексене кирлĕ вырăна пырса хурать.

Пĕр сехет хушшинче станок 10 пин чӳлмек хатĕрлеме пултарать. Станок патĕнче 4—5 çын ĕçлеççĕ. Агрегатăн механизмĕсене электромоторпа ĕçлеттереççĕ. Çавăн пекех вĕсене «ХТЗ-7» тракторăн карданнăй валĕ те ĕçлеттерме пултарать.

1953—1954 çулсенче пирĕн промышленность колхозсемпе совхозсенчи пахча çимĕç хуçалăхĕсем валли «ИГ-9» станоксем 6 пин туса кăларать. (ТАСС).

АРТИЛЛЕРИ КУНĔ УМĔН

Ноябрĕн 22-мĕшĕ—Артиллери кунĕ. Совет халăхĕ тата унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем çак уява тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Хуласемпе ялсенче, çар чаçĕсемпе подразделенисенче, флотсемпе флотилисенче совет артиллерисчĕсен çапăçусенчи мухтавлă ĕçĕсем çинчен докладсем, калаçусем, лекцисем иртереççĕ. Клубсенче, культура çуртĕсемпе дворецĕсенче тăван çĕршыври артиллерин паттăр историне кăтартса паракан фотовитринăсем хатĕрлеççĕ.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн цехĕсенче Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан Артиллери Академийĕнче вĕренекенсем тата преподавательсем Артиллери кунĕ çинчен докладсем туса панă, лекцисем вуланă.

Совет Çарĕн М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Центральнăй Çуртĕн библиотекинче Артиллери кунĕ ячĕпе кĕнекесен выставки уçăлнă. Çавăн пек выставкăсем ытти библиотекăсенче тата Мускав гарнизонĕнчи Офицерсен çуртĕсенче те пулаççĕ. (ТАСС).

Куйбышев гидроэлектростанцине тунă çĕрте

КОМСОМОЛЬСКИ ПОСЕЛОКĔ (Куйбышев облаçĕ), ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Çӳхе юр сийĕ Жигули сăрчĕсене витсе хунă. Куйбышев гидроэлектростанцийĕн строительство площадкисем çинче те юр выртать.

Атăл тăрăх талккăшпех пăр юхать. Юханшыв варринче, шыв чи хăвăрт юхакан вырăнта, гидроэлектростанци котлованĕ тĕлĕнче бетонран, чулпа хурçăран тунă çӳлĕ юпа ларать. Вăл инçетрен пысăк башня евĕрлĕ курăнать. Ку вăл—Атăл урлă канат карса тăвакан çулăн шыв варринчи юпи. Çав çул Атăлăн икĕ хĕрринчи чул тата хăйăр кăларакан вырăнсене бетон завочĕсемпе çыхăнтарса тăмалла.

Старши прораб В. Ф. Крылов ертсе пыракан строительсен коллективĕ юпан бетон пайне туса çитерчĕ. Металл мачта лартмалли тимĕр-бетон юпа шывран 15 метр ытла çӳлерехре ларать. Çывăх кунсенче башньăн металл конструкцийĕсене пухма тытăнаççĕ. Мачтăна вырнаçтарса лартсан, ун çинче, 70 метр çӳлĕшĕнче, питĕ çирĕп хурçă канатсем—рельссем çирĕплетеççĕ, вĕсем тăрăх вагонеткăсем çӳреме пуçлаççĕ.

Юпасем-мачтăсем сулахай çыранта тăпра купаласа тунă çӳлĕ вал патне пыраççĕ. Çав вал хыçĕнче çиелтен шыв юхса тăмалли плотина котлованĕ пуçланать. Унта бетон хума тытăннă. Ку плотинана тума 2,5 миллион кубометра яхăн бетон хумалла.

Перемычка хыçĕнче, Телячий утравăн варри тĕлнелле, шыв юхса тăмалли плотина çумĕнчен çĕр купаласа тунă плотина пуçланса каять. Гидростроительсем çак сооруженипе Атăла пӳлсе лартаççĕ. Ăна тума 30 миллион кубометра яхăн хăйăр купаламалла.

Гидроузелăн пăрахутсем çӳремелли системин каналĕсене чавнă çĕрте кăнтăрла та, çĕрле те ĕç чарăнмасть. Юлашки вăхăтра Иван Кулиничпа Виктор Хлюст ертсе пыракан экипажсем ĕçре пысăк çитĕнӳ тунă, вĕсем сменăри заданисене тăташах иртерсе тултараççĕ. Çак уйăхра гидромеханизаци меслечĕпе пурĕ пĕр миллион кубометра яхăн çĕр чавса кăларнă.

Ялхуçалăхĕ çĕнĕ техника илет

Сталино облаçĕнчи колхозсемпе МТС-сем кăçал кукурузăна тăваткал тĕмĕн акмалли трактор сеялкисем 200, рет хушшисене кăпкалатмалли культиваторсем 500 илнĕ.

Халĕ облаçе выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсене тата пахча çимĕç лартса тăвас ĕçсене механизацилемелли оборудовани нумай илсе килеççĕ. (ТАСС).

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛА АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ 36 ÇУЛ ТУЛТАРНИ ÇИНЧЕН К. Е. ВОРОШИЛОВ ЮЛТАШ ТУНĂ ДОКЛАДА УЙРĂМ КĔНЕКЕ ТУСА ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРНĂ

Государствăн политикăлла литература издательстви К. Е. Ворошилов юлташ Мускав Совечĕн савăнăçлă ларăвĕнче 1953 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарни çинчен тунă доклада уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

Кĕнекене пысăк тиражпа пичетленĕ.

(ТАСС).

Мускав. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Самотечнăй бульварта Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ В. И. Попков подполковнике хисеплесе лартнă монумента уçнă. Летчик-истребитель В. И. Попков Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фашистсен 40 самолетне персе ӳкернĕ.

Монумента Сталинла премин лауреачĕ Л. Кербель скульптор тата Л. Голубовский архитектор тунă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ В. И. Попков хăйĕн çемйипе монумент патĕнче.

А. СТУЖИН тата А. ЛЕСС фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çĕнĕ магазинсемпе складсем

ССР Союзĕн Суту-илӳ министерстви суту-илӳ предприятийĕсем нумай тăвать. Çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те çĕнĕ магазинсем, суту-илӳ базисем, складсем, ресторансем, столовăйсем, кафесем, закусочнăйсем туса лартаççĕ.

1954 çулта çĕршывра 2.300 магазин тата обществăлла апатлану валли 1.600 предприяти уçăççĕ. Гастрономипе бакалея таварĕсене сыхласа усрама 90 пин тонна тавар вырнаçмалăх, пир-авăр, галантерея, парфюмери тата ытти таварсене те сыхласа усрама 100 пин тăваткал метр механизациленĕ складсем тума палăртнă.

ССР Союзĕн Суту-илӳ министерствинче строительство енĕпе ĕçлекен Главнăй управлени (Главторгстрой) пулать. (ТАСС).

Хамăр республикăра

Канаш хулинчи предприятисем—колхозсене

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен постановлени йышăннăранпа Канаш хулинчи промышленность предприятийĕсем колхозсене пулăшас ĕçе вăйлатса пыраççĕ.

Хуларти промкомбинат (директорĕ М. Орлов юлташ) кăçал республикăри колхозсене 474 кормозапарник туса панă.

Промкомбинат коллективĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене механизацилеме пулăшас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Колхозсем валли шыв паракан виçĕ башня тунă. Çав башньăсене Канаш районĕнчи Ухманти Ленин ячĕпе тăракан колхозра, Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра та ырлаççĕ. Халĕ промкомбинат коллективĕ Канаш районĕнчи «Комбайн» колхоз валли горючи усрамалли цистерна тăвать.

Юлашки вăхăтра промкомбината хула çывăхĕнчи колхозсем плугсемпе сеялкăсем тата ытти машинăсем юсама нумай илсе килме пуçларĕç. Çак заказсене промкомбинат вăхăтра тата лайăх пурнăçлама тăрăшать.

Хуларти «1-ое Мая» артель те (председателĕ Н. Тихонов юлташ) колхозсене пулăшас ĕçе вăйлатса пырать. Артель хула çывăхĕнчи «Мотор» колхоза шефа илчĕ. Шефа илнĕ колхоза пулăшса парник рамисем тума тытăннă. Кăçал артель колхоза тырпула уй-хиртен пуçтарса кĕртнĕ тата государствăна тыра панă вăхăтра ятарласах автомашина парса пулăшрĕ. Артель пулăшнипе колхоз государствăна çĕрулмипе пахча çимĕçсем памалли плана кĕске срокра пурнăçларĕ. Артельти художествăлла пултарулăх кружокĕ колхоза кайса час-часах концертсем лартса парать, агитколлектив тĕрлĕ докладсемпе лекцисем иртерет.

С. АСЛАН,
Г. ИСАЕВ.

Шупашкарти лента тĕртекен фабрика производство планне ăнăçлă тултарса пырать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ремонтер В. Макеев тата бригадир А. Миронов юлташсем станока юсаççĕ. Вĕсем станоксене юсас ĕçе яланах вăхăтра тата питĕ лайăх туса пыраççĕ.

А. КОСТИН фотоӳкерчĕкĕ.

Корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

КАЛИНИНО. Çак кунсенче корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени тата корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен канашлура КПСС райкомĕн секретарĕ И. Сергеев юлташ доклад турĕ.

Прениире тухса калакансем юлашки вăхăтра вырăнти пичет ĕçĕ палăрмаллах лайăхланнине, чылай колхозсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăнине, уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче боевой листоксем тухнине палăртрĕç. Айкăш ял Совечĕ çумĕнчи «Çĕнтерӳ» стена хаçачĕ уйăхра икĕ хут тухса тăрать, ун çине çыракансен хисепĕ 50 çынтан иртет.

Прениире тухса калакансем колхозсенчи стена хаçат редколлегийĕсене районти хаçат çителĕксĕр пулăшни, хăшпĕр колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем стена хаçачĕпе боевой листоксем кăларас ĕçе çителĕксĕр ертсе пыни çинчен каларĕç, районти «Сталин çулĕпе» хаçатăн ĕçне лайăхлатма паха сĕнӳсем пачĕç.

П. КРАСНОВ.

Студентсен кунĕ

Ноябрĕн 17-мĕшĕ—Пĕтĕм тĕнчери студентсен кунĕ. Чăваш Педагогика институтĕнче çак куна паллă туса вуламалли залсемпе кабинетсенче тĕрлĕрен çĕршывсенчи студентсен пурнăçĕпе вĕсем миршĕн кĕрешни çинчен калакан материалсенчен витринăсем организациленĕ.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнче каçхине филармони залĕнче Шупашкарти студентсен пухăвĕ пулчĕ. «Пĕтĕм тĕнчери студентсен кунĕ» темăпа чĕлхепе литература уйрăмĕнче II-мĕш курсра вĕренекен Г. Гундорова юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн художествăллă пултарулăх коллективĕ пысăк концерт пачĕ.

В. ШАЛТАЙКИН.

Выльăх-чĕрлĕх туянаççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине тимлĕн пăхаççĕ.

Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче колхоз правленийĕ пулăшнипе çичĕ хуçалăх ĕне туянчĕ. Урăх выльăх-чĕрлĕх туянакансем те чылай.

Чкалов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче те выльăх-чĕрлĕх туянакан колхозниксен хисепĕ ӳссех пырать.

Н. КАДКИН.

Пысăк выляв

ЕТĔРНЕ. Кунти перекет касси Чебаково ял Советĕнчи В. колхозницăна 10 пин тенкĕ выляв укçи тӳлерĕ. Районти перекет кассисем ĕçсыннисене кăçал 620 пин тенкĕ ытла выляв укçи тӳлерĕç. IV-мĕш кварталта вклад укçине ӳстермелли плана 200 процент ытла тултарнă.

И. ПЕТРОВ.

Государствăна—выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

Республикăри совхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли çулталăк планне срокчен тултарнă.

Кăçал совхозсем хатĕрлев пункчĕсене иртнĕ çулхинчен 120.400 литр ытла сĕт панă.

УЛАТĂР. Районти колхозсемпе колхозниксем государствăна аш-какай памалли плана иртерсе тултарнă. Заготскот пункчĕпе потребительсен кооперацине иртнĕ çулхинчен 8.620 пăт ытларах аш-какай панă тата сутнă.

ЭЛĔК. Районти колхозсемпе колхозниксем государствăна çăм памалли çулталăк планне срокчен тултарнă.

ЧКАЛОВСКИ. Районти колхозсемпе колхозниксем государствăна аш-какай памалли плана 108 процент тултарнă. Вĕсем иртнĕ çулхинчен государствăна 7.370 пăт ытларах аш-какай панă тата сутнă.

Çĕнĕ стройкăсем

КРАСНОАРМЕЙСКИ. (Хамăр корр.). «Гигант» ялхуçалăх артелĕнче строительство ĕçĕ вăйланса пырать. Кăçал саман кирпĕчрен чăх вити, 100-шер тонна кĕрекен икĕ овощехранилище, кормокухня тунă. Ферма çывăхĕнчех чулпа бетонран силос хывмалли виçĕ полубашня тунă. Халĕ колхозниксем клуб çуртне туса пĕтереççĕ.

«Партизан» колхозра кăçал саманран 150 сурăх вырнаçмалăх сурăх вити, 100 тонна кĕрекен овощехранилище, кормокухня тунă. Унта кормозапарник вырнаçтарнă.

РАЙОНСЕНЧИ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ

УЛАТĂР

Улатăр районĕнчи парторганизацин черетлĕ конференцийĕнче КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ П. Поверенное юлташ доклад туса пачĕ.

Парти райкомĕ колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн нумай тăрăшнă. Чылай колхозсен хуçалăхĕ тĕрекленнĕ, вĕсенче ĕç дисциплини çирĕпленнĕ. Çĕрĕç культури ӳссе пырать. Кăçал хĕреслĕ майпа акмалли плана 116 процент, ансăр ретпе акмалли плана 114 процент тултарнă. Колхозсен обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине те тимлĕн пăхма пуçларĕç.

Колхозсем тĕрекленнĕ май, вĕсен тупăшĕ те ӳсет. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тырпул тата укçа ытларах та ытларах валеçсе параççĕ. «Путь Ильича», «Победа», «Красный луч» колхозсен тупăшĕ миллиона çити ӳсрĕ.

Апла пулин те, ялхуçалăхĕнче çитменлĕхсем нумай-ха. Районти ялхуçалăх юлса пырать. Чылай колхозниксен хуçалăхĕ вăраххăн ӳсет.

Парти райкомĕ юлса пыракан колхозсене аталантарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Кадрсем суйласа илес ĕç уйрăмах начар тăрать. Пуçламăш парторганизацисен организаторла рольне ӳстерессишĕн райком кирлĕ чухлĕ тăрăшман.

Районти промышленность предприятийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Уйрăммăнах вăрман промышленноçĕн Улатăрти тата Алтышеври предприятийĕсем начар ĕçлеççĕ, вĕсем производство планне уйăхран уйăха тултарса пымаççĕ.

Доклад тăрăх тухса каланă юлташсем райком ĕçĕнчи ытти пысăк çитменлĕхсене те кăтартса пачĕç. Астафьев юлташ кадрсем суйласа илес ĕçре йĕркесĕрлĕхсем пуррине палăртрĕ. Парти райкомĕ Молотов ячĕпе тăракан, «Первомайский», «25 лет ЧАССР» колхозсен председателĕсем пулма малтан ĕçре айăпланнă тата ĕçре тĕрĕслемен çынсене сĕннĕ.

Улатăрти вăрманпромхоз директорĕ Жигалов юлташ вăрман хатĕрлемелли сезона кĕтсе илес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем çинчен тата ĕçри çитменлĕхсем çинчен каласа пачĕ.

— Эпир ку тарана çитсе те,—тет вăл,—механизмсемпе туллин усă курайман. Механизмсене юсакан Улатăрти мастерской япăх ĕçлет, машинăсене лайăх юсассишĕн тăрăшмасть. Çавăн пекех вăрман тресчĕ те вăрманпромхозсене çĕнĕ машинăсем туянтарассишĕн сахал тăрăшать.

Майоров юлташ çакна палăртрĕ:

— КПСС райкомĕн членĕ «Путь Ильича» колхоз председателĕ Яблонский юлташ колхозри ĕçсене яланах лайăх енчен кăна кăтартса парать, çав вăхăтрах колхозра ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ, анчах Яблонский юлташ çав çитменлĕхсем çинчен парти райкомне уççăн каласа паман.

КПСС райкомĕн работникĕсем бюрора сӳтсе явакан ыйтусене тĕплĕн хатĕрлемеççĕ, çавăн пирки бюро йышăнакан решенисем конкретлă мар, вĕсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслеме те хĕнтерех.

Серенков юлташ колхозсен государство умĕнчи ответлăхне ӳстерес тĕлĕшпе парти райкомĕ кирлĕ пек тăрăшманнине палăртрĕ. Çавна пула,—тет вăл,—районти чылай колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана тултарман.

«Красная звезда» колхоз председателĕ Яковлев юлташ парти райкомĕ кая юлса пыракан колхозсене ĕçре сахал пулăшнине кăтартса пачĕ. Райком работникĕсем юлса пыракан колхозсенче сахал пулаççĕ, унти парторганизацисен пурнăçĕпе сахал интересленеççĕ. Иртнĕ çулта пирĕн парторганизаци секретарĕ пулма Гордеев юлташа ячĕç. Анчах Гордеев колхозри пуçламăш организацие ертсе пыма çителĕксĕр хатĕрленнĕ çын пулнă. Вăл колхозра 15 уйăх ĕçлерĕ, анчах çав шутран 6 уйăхне тĕрлĕ сăлтавсемпе урăх çĕрте ирттерчĕ. Парторганизаци ĕçĕ япăхса кайрĕ. Колхозри ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

МТС-ри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Митин юлташ райком секретарĕсене аялтан килекен критикăна хакламаншăн, çав критикăран тивĕçлĕ выводсем туса, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклерĕ. Уйрăмах парти райкомĕ МТС-ри парторганизацирен килекен критикăна шута илмест.

«Красный луч» колхоз председателĕ Лĕнин юлташ колхоз çитĕнĕвĕсем çинчен каласа пачĕ. 1952 çулта колхозăн укçа-тенкĕ тупăшĕ 600 пин тенкĕ пулнă пулсан, кăçал вăл 1 миллион тенке çитнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕхрен 200 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал государствăна планран ирттерсе 40 пин литр сĕт сутнă. Хуçалăхра пысăк ситĕнӳсем тума,—тет вăл,—пире пуçламăш парторганизаци пулăшать.

Лĕнин юлташ суту-илӳ организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕ. Колхозсене пулăшас тĕлĕшпе хулари промышленность предприятисен уйрăм колхозсене шефа илмелле,—терĕ вăл.

Конференци активлă иртрĕ. Доклад тăрăх 23 çын тухса каларĕ.

Райкомăн организацилле пленумĕ КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма А. Киреев юлташа, райком секретарĕсем пулма Е. Латышевпа А. Балятинская юлташсене суйларĕ.

СОВЕТСКИ

Партин районти организацийĕн VII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ Н. Русанов юлташ доклад туса пачĕ.

— Партин районти организацийĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçласа пынă май,—тет докладчик,—партилле-политикăлла, партилле-организацилле ĕçсене, хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕ.

Машина-трактор станцийĕ çĕнĕ техникăпа нумай пуянланчĕ, колхозсем пĕрлешсе пысăкланчĕç. Çаксем ялхуçалăх ĕçĕсене ытларах механизацилеме май пачĕç. Халĕ районти мĕнпур çĕр лаптăкĕн 81 процентне МТС акса парать.

Колхозсем уй-хир ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыма тытăнчĕç. Çуракипе тырпул пухса кĕртессине тата хатĕрлев ĕçĕсене иртнĕ çулхисенчен чылай малтанрах ирттернĕ. Çавăн пекех обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те хăшпĕр ӳсĕмсем пур.

КПСС райкомĕ пуçламăш парторганизацисемпе çыхăну тытассине чылай лайăхлатрĕ. Вăл колхозсене уполномоченнăйсем ярас йăлана пăрахăçларĕ. Парторганизацисен тата районти ертсе пыракан организацисен рольне ӳстерни юлса пыракан чылай колхозсене малти рете тухма пулăшрĕ.

Анчах районти пуçламăш парторганизацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерсе ситермен-ха. Пуçламăш парторганизацисем партилле-политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çаплах çителĕксĕр çыхăнтарса пыраççĕ. Çакна колхозсем артель хуçалăхне малалла аталантарма пулăшакан шалти резервсемпе тата майсемпе çителĕксĕр усă курни те лайăх кăтартса парать. Колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ çаплах пĕчĕккĕ-ха, ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем те сахал мар.

Кунпа пĕрлех докладчикпа тухса каланă юлташсем çакна палăртрĕç: парти райкомĕпе райисполком КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Юлса пыракан хăшпĕр колхозсене малалла аталантарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туман. Володарский ячĕпе тăракан, «Герой» колхозсем авăн çапса пĕтермен, вăрлăх фондне хывса çитермен. Вĕсем çĕрулми кăларнă çĕрте пысăк тăкаксем турĕç. Парти райкомĕ асăннă колхозсенчи парторганизацисенче партилле-политикăлла, партилле-организацилле ĕçсене лайăхлатма пулăшман, коммунистсен производствăри авангардлă рольне çĕклемен.

Колхозсенче çĕрĕç культури вăраххăн ӳсет. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, .çĕрулмипе пахча çимĕç, техникăлла культурăсем ӳстерес ĕçсене нумай колхозсенче механизацилемен. Районта вăйлă тырпул ӳстерекен колхозсемпе бригадăсем пур. Анчах малта пыракан колхозсен опытне тата наука çитĕнĕвĕсене ĕçе начар кĕртсе пыраççĕ. Иртнĕ çулта агротехникăна вĕренмелли пĕр курсра та программăна вĕçлемен. Нумай колхозсенчи агрозоокурссенче занятисем кăçал та йĕркеллĕ иртмеççĕ. Çавăн пекех колхоз председателĕсен пĕлӳлĕхне ӳстерес ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ.

Парти конференцийĕ уйрăмах обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ.

Колхозсем выльăх апачĕ хатĕрлес, сурт-йĕрсем тăвас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Фермăсенче ĕçлекенсене тăтăшах улăштарса тăраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте 29 коммунистпа 85 комсомолец кăна ĕçлет.

Конференцире тухса калакансем МТС ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен нумай чарăнса тăчĕç. МТС хăватлă техникăпа çителĕксĕр усă курать, малта пыракан опытпа наука кăтартăвĕсене ĕçе вăраххăн кĕртсе пырать. Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне пĕлтĕр те, кăçал та тултарман. Начар юсанă пирки чылай тракторсем çуракине тухсан ахалех ларчĕç. Нумай механизаторсем сменăри ĕç нормисене тултарса пымаççĕ, начар ĕçлеççĕ. Механизаторсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Н. Столяров тата Жданов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. Свешников юлташсем парти райкомĕпе райисполкома юлса пыракан колхозсене çителĕксĕр ертсе пынишĕн критиклерĕç тата райком секретарĕсем колхозсенче кĕске вăхăтлăха çеç пулни çинчен каларĕç.

— «Заря» колхоз — юлса пыракан артельсенчен пĕри. Анчах колхоз мĕншĕн юлса пынипе районти ертсе пыракан организацисем интересленмен. КПСС райкомĕ, вăтам цифрăсем хыççăн кайса, пирĕн колхозри çитменлĕхсене курмасть,— тет А. Савальев юлташ.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Иванов юлташ КПСС райкомне ĕçсыннисен ыйтăвĕсемпе жалобисем çине çиелтен пăхнăшăн критиклерĕ.

Конференци, партин районти организацийĕн ĕçне малалла лайăхлатмалли майсене кăтартса, постановлени йышăнчĕ тата райкомăн çĕнĕ составне суйларĕ.

Райкомăн организацилле пленумĕ КПСС райкомĕн секретарĕсем пулма Н. Русанов, Я. Лодин, А. Альянов юлташсене суйларĕ.

Парти вĕренĕвĕ Шупашкарта

Партин Шупашкар хула комитечĕ тата хулари пуçламăш парторганизацисем, КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, парти членĕсемпе кандидачĕсене тата кадрсене марксистла-ленинла теорие вĕрентес ĕçе кăçал иртнĕ çулхинчен лайăхрах организациленĕ.

Хулари парторганизацире пурĕ 436 политшкулпа кружок ĕçлет. Ертсе пыракан кадрсемпе интеллигенцие диалектикăлла тата историлле материализма, политэкономие, совет экономикин ыйтăвĕсене вĕрентме 18 семинар организациленĕ. Парти историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмелли кружоксен тата тĕрлĕ семинарсен шучĕ кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай ӳснĕ. Çакă вăл парти вĕренĕвне партире тăманнисем ытларах хутшăннинчен килнĕ.

Кружоксемпе политшкулсенче тата семинарсенче пурĕ 9.237 çын, вĕсенчен партире тăман активпа совет интеллигенцийĕ 3,567 çын вĕренеççĕ. Парти вĕренĕвне 995 комсомолец хутшăннă. 1.601 коммунист тата партире тăман кадрсемпе интеллигенци—455 çын хăйсен политикăлла пĕлĕвне харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе ӳстереççĕ. 250 çынна яхăн марксизмленинизмăн каçхи университетĕнче вĕренет. Унсăр пуçне хулара каçхи партшкулсем иккĕ ĕçлеççĕ, вĕсенче 104 çын вĕренет.

Коммунистсемпе кадрсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерес ĕçре партин хула комитечĕн библиотеки тата пысăк предприятисемпе учрежденисенчи парти библиотекисем пăллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Хула комитечĕн библиотекинче кĕнекесем тата паглядлăй пособисем çителĕклĕ.

Марксизм-ленинизмăн каçхи университетĕнче, каçхи партшкулсенче, политшкулсемпе кружоксенче тата марксизмленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем библиотекăра пĕрмаях пулаççĕ. Вĕсем кунта квалификациллĕ лекцисемпе докладсем итлеççĕ, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх консультацисем илеççĕ. Лекцисемпе докладсене темиçе циклпа ирттереççĕ.

Библиотекăра пропагандистсен семинарĕсем пулса иртеççĕ. Çав семинарсене парти вĕренĕвĕн кăçалхи сулĕ пуçланиччен виçĕ хутчен, иртнĕ уйăхра сакăр хутчен ирттернĕ.

Хула комитечĕн лекторĕсем, пропагандистсене пулăшас тесе, октябрьте Сосновка поселокĕнчи парти библиотекинче икĕ хутчен, Чапаевски поселокри парти библиотекинче виçĕ хутчен семинар ирттернĕ. Предприятисемпе учрежденисенче тата шкулсенче çав лекторсемех иртнĕ уйăхра 17 лекци вуланă.

Çамрăксен йăла условийĕсене лайăхлатмалла

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Шупашкар хулинче пурăнмалли çĕнĕ çуртсем чылай лартрĕç. Темиçе çĕр çемье лайăх хваттерсем туянчĕ. Пысăк предприятисемпе юнашар рабочи поселоксем ӳссе ларчĕç. Производствăра ĕçлекен çамрăк рабочисем валли, вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсем валли уйрăм общежитисем нумай тунă.

Чылай общежитисенче çамрăксем валли пурăнма лайăх условисем туса панă. Кунта ĕç хыççăн канма, вĕренме пур майсем те çителĕклĕ. Сăмахран, Чапаевски поселокри çамрăксен общежитийĕнчи пӳлĕмсенче çутă, ăшă, таса. Чӳречесем çинче чĕнтĕрсем çакăнса тăраççĕ, сĕтелсемпе тумбочкăсем çине çиттисем сарнă. Пур пӳлĕмсенче те радио пур.

Анчах чылай общежитисенче кун пек мар-ха. Хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем çамрăксене пурăнма кирлĕ условисем туса парасси çине çителĕксĕр пăхаççĕ. Виçĕ çул каярах Карл Маркс урамĕнче электроаппаратура завочĕ çамрăк рабочисем валли общежити туса лартрĕ. Çавăнтанпа общежитие пĕрре те юсаман, пӳлĕмсене те шуратман. Кухнясенчи стенасем хуралнă, хăшпĕр пӳлĕмсенче маччари штукатурка хăпанса ӳкнĕ, умывальниксенче чассах шыв пулмасть. Художествăлла техникумпа энерготехникумра вĕренекенсен общежитийĕсенче те çавăн пекех.

Çамрăксен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатасси комсомол организацийĕсен ĕçĕ. ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ общежитисенче пурăнакан çамрăксен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен сӳтсе яврĕ. Ку вăхăтлă та вырăнлă пулчĕ.

Общежитисенче политикăлла-воспитанилле тата культурăлла-массăлла ĕçсене çителĕксĕр йĕркеленĕ. Пуçламăш комсомол организацийĕсем çамрăксен пурнăç ыйтăвĕсем çине тимсĕр пăхаççĕ, вĕсен йăла условийĕсене лайăхлатасси çинчен хуçалăх руководителĕсем умне требованисем лартмаççĕ, комсомол пухăвĕсенче сӳтсе явмаççĕ.

Лента тĕртекен фабрикăн, пир-авăр комбиначĕн, энерготехникумăн общежитийĕсенче лекцисем, докладсем, калаçусем сахал пулаççĕ, агитаторсем общежитисенче уйăхĕ-уйăхĕпех пулмаççĕ, хаçат-журналсем, илемлĕ литература, сĕтел çинче вылямалли вăййсем çителĕксĕр. Çавна пула çамрăксем пушă вăхăта усăсăр ирттереççĕ.

Общежитисенче советсем, пӳлĕмсен старостисем пур, анчах хула комитечĕ те, пуçламăш комсомол организацийĕсем те вĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

ВЛКСМ хула комитечĕн пленумĕ общежитисенче пурăнакан çамрăксем хушшинче политикăлла тата культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ.

Б. КОСТРОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи шкулсенчи учительсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1948 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче кăларнă Указпа килĕштерсе, нумай вăхăт хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ

1. Александра Арсентьевна Орловăна—Совотскинчи вăтам шкулти учительницăна.
2. Андрей Аристархович Петрова — Çĕмĕрле районĕнчи Турханти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
3. Александр Ефимович Пушкова — Елчĕк районĕнчи Акчелти пуçламăш шкул заведующине.
4. Валентина Дмитриевна Распоповăна—Улатăр хулинчи 7-мĕш вăтам шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
5. Сергей Матвеевич Толмачова — Шупашкар хулинчи 3-мĕш вăтам шкулти учителе.
6. Алексей Егорович Топтыгина — Шăмăршă районĕнчи педагогика кабинечĕн заведующийĕ пулнăскерне.
7. Анастасия Федотовна Уховăна — Шупашкарти 3-мĕш вăтам шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.

ĔÇЛĔХ ХĔРЛЕ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Елизавета Павловна Александровăна—Шупашкарти 1-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
2. Иван Григорьевич Григорьев-Лукишова—Канашри учительски институт çумĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
3. Ирина Петровна Ермошинăна — Канашри учительски институт çумĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
4. Анна Ивановна Ефремовăна — Вăрнар районĕнчи Вăрманкасри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
5. Феодора Павловна Исаковăна — Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкулти учительницăна.
6. Ангелина Викторовна Кабаевăна — Йĕпреçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
7. Юлия Антиповна Коноваловăна — Комсомольскинчи вăтам шкулти учительницăна.
8. Яков Никитич Никитина — Çĕмĕрлери çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
9. Юлия Степановна Степановăна — Шăхасанти вăтам шкулти учительницăна.
10. Феврония Никифоровна Тарасовăна—Шăхасан районĕнчи Сителти пуçламăш шкул заведующине.
11. Лидия Павловна Черновăна — Йĕпреçри вăтам шкулти учительницăна.
12. Клавдия Сергеевна Шляминăна — Бувакино районĕнчи Березовски Майданри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

«ХИСЕП ПАЛЛИ» ОРДЕНĔПЕ

1. Иван Афанасьевич Гладкова—Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимешри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
2. Александра Георгиевна Дмитриевăна—Шупашкар хулинчи 3-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
3. Мария Константиновна Дроздовăна—Улатăр хулинчи 9-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
4. Нина Егоровна Карповăна—Шупашкар хулинчи 6-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
5. Пелагея Архиповна Кудряшовăна — Шупашкар районĕнчи Иккассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
6. Никифор Андреевич Кушникова — Чкаловски районĕнчи Патăрьелĕнчи вăтам шкулти учителе.
7. Надежда Федоровна Манеимовăна — Йĕпреç районĕнчи Буинскри вăтам шкулти учительницăна.
8. Агафия Григорьевна Михайловăна—Шупашкар районĕнчи Хыркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
9. Лидия Филипповна Михайловăна — Шăмăршă районĕнчи Пăчăрлă Пашьелĕнчи вăтам шкулти учительницăна.
10. Клавдия Ивановна Наумовăна — Пăрачкаври педагогика училище çумĕнчи шкулти учительницăна.
11. Елизавета Гавриловна Павловăна—Чурачăкри вăтам шкулти учительницăна.
12. Вячеслав Никифорович Патова — Йĕпреç районĕнчи Хурамалти вăтам шкулти учителе.
13. Екатерина Петровна Петровăна — Первомайски районĕнчи Чăваш Çармăсри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
14. Петр Григорьевич Порунова — Куславкка районĕнчи Елчĕкри вăтам шкулти учителе.
15. Ольга Васильевна Пятницкаяна — Тăвайри вăтам шкулти учительницăна.
16. Ксения Матвеевна Саррăна — Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкулти учительницăна.
17. Петр Васильевич Секачкина — Йĕпреç районĕнчи Кармалти пуçламăш шкул заведующине.
18. Мария Тихоновна Тихоновăна — Красноармейски районĕнчи Шупуçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
19. Яков Федорович Федорова — Шупашкар районĕнчи Апашри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
20. Клавдия Ивановна Христофоровăна—Йĕпреç районĕнчи Чернореченскри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
21. Иван Иванович Чернова—Йĕпреç районĕнчи сутĕç пайĕн заведующине.

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Александр Александрович Александрова—Сĕрпӳри вăтам шкулти учителе.
2. Василий Александрович Александрова—Октябрьски районĕнчи Чăрăш Туçари çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
3. Степанида Алексеевна Алексеевăна—Шăхасан районĕнчи Сителти пуçламăш шкулти учительницăна.
4. Александра Варфоломеевна Ашмаринăна—Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулти учительницăна.
5. София Яковлевна Большаковăна — Улатăр районĕнчи Атратьри вăтам шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
6. Татьяна Филипповна Григорьевăна—Канашри учительски институт çумĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
7. Зейнап Алиулловна Даутовăна — Чкаловски районĕнчи Хирти Пикшикри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
8. Анна Егоровна Егоровăна — Канаш районĕнчи Катекри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
9. Зоя Павловна Ефимовăна — Йĕпреç районĕнчи Сĕрпӳелĕнчи пуçламăш шкулти учительницăна.
10. Вера Михайловна Журавлевăна — Шупашкар хулинчи 11-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
11. Вера Афанасьевна Зарубинăна — Октябрьскинчи вăтам шкулти учительницăна.
12. Анна Леонтьевна Ивановăна — Шупашкар хулинчи 6-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
13. Петр Иванович Иванова — Чкаловски районĕнчи Алманчăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.
14. Нина Ивановна Иливановăна — Куславкка районĕнчи Елчĕкри вăтам шкулти учительницăна.
15. Раиса Михайловна Исаевăна — Чкаловски районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳртри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
16. Никон Семенович Капитонова — Первомайски районĕнчи Анат Тăрмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.
17. Мария Степановна Кирилловăна—Первомайски районĕнчи Кĕçĕн Арапуçри пуçламăш шкул заведующине.
18. Лидия Григорьевна Красновăна — Улатăр районĕнчи Алтышеври çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
19. Вера Григорьевна Кузнецовăна — Етĕрне районĕнчи Иваньковăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
20. Капитолина Васильевна Куликовăна—Калинино районĕнчи Хăмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
21. Нина Трофимовна Кутузовăна — Советски районĕнчи Асламасри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
22. Иван Ильич Матвеева—Красноармейски районĕнчи Сурăмхĕрринчи пуçламăш шкул заведующине.
23. Зоя Кузьминична Модюскинăна — Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
24. Мария Лукиановна Марковăна — Йĕпреçри вăтам шкулти учительницăна.
25. Михаил Павлович Никитина — Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
26. Ольга Григорьевна Никитинăна — Етĕрнери вăтам шкулти учительницăна.
27. Михаил Алексеевич Орлова — Шупашкарти 22-мĕш вăтам шкулти учителе.
28. Ольга Порфирьевна Порфирьевăна—Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
29. Василий Давыдович Пудовкина — Йĕпреç районĕнчи Туçари çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.
30. Анна Мироновна Пушкинăна — Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăкри вăтам шкулти учительницăна.
31. Василий Осипович Ракова — Улатăр районĕнчи Атратьри вăтам шкул директорне.
32. Анна Ивановна Рожковăна — Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
33. Александр Семенович Семенова — Чкаловскинчи вăтам шкулти учителе.
34. Михаил Семенович Семенова — Шупашкар районĕнчи Хыркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.
35. Матрена Семеновна Семеновăна — Канаш районĕнчи Карăклăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
36. Надежда Васильевна Семеновăна—Йĕпреç районĕнчи Çиçĕмкассинчи пуçламăш шкулти учительницăна.
37. Мария Петровна Скворцовăна — Чкаловски районĕнчи Алманчăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
38. Евгения Кузьминична Сорокинăна—Куславкка районĕнчи Варасăрти çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
39. Михаил Васильевич Спинова — Чкаловски районĕнчи Патăрьелĕнчи вăтам шкулти учителе.
40. Нина Алексеевна Спиновăна — Чкаловски районĕнчи Треньелĕнчи пуçламăш шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
41. Феодора Степановна Степановăна—Шупашкар районĕнчи Толик Хураскинчи вăтам шкулти учительницăна.
42. Серафима Григорьевна Сульдинăна—Улатăр районĕнчи Атратьри вăтам шкулти учительницăна.
43. Таисия Терентьевна Терентьевăна—Красноармейски районĕнчи Вутланти пуçламăш шкул заведующине.
44. Гурий Васильевич Толстова — Чкаловски районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳртри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе.
45. Нина Павловна Уткинăна — Чурачăк районĕнчи Ямашри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
46. Перасковья Федоровна Федоровăна—Вăрнар районĕнчи Çĕрпелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
47. Галина Васильевна Чилита—Сĕнтĕр районĕнчи Урпашри вăтам шкулти учительницăна.
48. Зоя Васильевна Шигаевăна—Шупашкар хулинчи 4-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
49. Ольга Васильевна Шипатовăна — Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăкри вăтам шкулти учительницăна.
50. Елизавета Родионовна Шишкинăна—Елчĕк районĕнчи Акчелти пуçламăш шкулти учительницăна.
51. Дарья Павловна Якимовăна—Йĕпреçри вăтам шкулти учительницăна.
52. Федор Яковлевич Яковлева—Шăхасан районĕнчи Атнашри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
53. Хиония Алексеевна Ярдыковăна—Советски районĕнчи Асламасри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Мария Васильевна Агановăна — Етĕрне районĕнчи Яровокассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
2. Лидия Ильинична Александровăна—Советски районĕнчи Хучашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
3. Николай Александрович Александрова—Чурачăк районĕнчи Улаксарти пуçламăш шкул заведующине.
4. Федосия Александровна Александровăна—Чкаловски районĕнчи Тури Туçари вăтам шкулти учительницăна.
5. Анна Осиповна Алексеевăна — Красноармейски районĕнчи Хусакассинчи пуçламăш шкул заведующине.
6. Евгения Павловна Алексеевăна — Чкаловски районĕнчи Тăранти çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
7. Капитолина Александровна Алексеевцевăна—Етĕрне районĕнчи Иваньковăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
8. Ольга Александровна Алякинăна — Чкаловски районĕнчи Сăкăтри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
9. Перасковия Николаевна Андреевăна—Советски районĕнчи Килтĕшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
10. Ефросиния Дмитриевна Андриановăна—Шупашкар хулинчи 6-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
11. Павел Александрович Антонова — Чкаловски районĕнчи Татмăшри пуçламăш шкул заведующине.
12. Петр Григорьевич Артамонова — Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
13. Юлия Артемьевна Артемьевăна — Шупашкар районĕнчи Барачурари çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
14. Юлия Никитична Афанасьевăна—Йĕпреç районĕнчи Хыркассинчи пуçламăш шкулти учительницăна.
15. Иван Петрович Бажаева — Комсомольски районĕнчи Хырхĕрри ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн заведующине.
16. Нина Николаевна Баюковăна — Вăрнар районĕнчи Çĕрпелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
17. Нина Александровна Брагинăна — Шупашкар хулинчи 7-мĕш вăтам шкулти учительницăна.
18. Клавдия Андреевна Будаевăна — Шупашкар районĕнчи Толик Хураскинчи вăтам шкулти учительницăна.
19. Татьяна Георгиевна Букинăна — Йĕпреç районĕнчи Буинскри вăтам шкулти учительницăна.
20. Перасковья Ивановна Ванеевăна—Ишлей районĕнчи Чантăрти пуçламăш шкулти учительницăна.
21. Лидия Тимофеевна Ванюшкинăна—Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Мăратри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
22. Яков Васильевич Васильева — Йĕпреç районĕнчи Чăрăшкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.
23. Евдокия Васильевна Васильевăна—Муркаш районĕнчи Мăн Янăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
24. Глафира Васильевна Васильевăна—Шупашкар районĕнчи Тĕкĕрçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.
25. Елизавета Федоровна Васильевăна—Советски районĕнчи Пракушкăньри пуçламăш шкулти учительницăна.
26. Лидия Сергеевна Васютинăна — Чкаловски районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳртри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăна.

(Малалли пулать).

Парторганизаци Пленум решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешет

Çĕрпÿ машина-трактор станцийĕнче

Партилле-политикăлла ĕçе вăйлатассишĕн

МТС-ри коммунистсемпе партире тăман механизаторсем тата специалистсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление парторганизацин уçă пухăвĕнче нихçанхинчен пысăк активлăхпа сÿтсе яврĕç. Социализмла ялхуçалăхне малалла аталантармалли аслă программăна пурнăçлассине вĕсем хăйсен тăван ĕçĕ вырăнне хурса йышăнчĕç. Пухура пулнисем партбюропа дирекцие трактор бригадисене çителĕксĕр ертсе пынăшăн, МТС-ăн пуян техникипе туллин усă курмалла тăвайманшăн тивĕçлипе критиклерĕç.

Пленум ялти парторганизацисен ĕçĕнче тупса палăртнă çитменлĕхсем пирĕн МТС-ри парторганизаци ĕçĕнче те пур.

Центральнăй Комитет ялти парти организацийĕсен массăсем хушшинчи организаторла тата политикăлла ĕçне пур майсемпе те вăйлатма хушрĕ Вĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçĕнче колхозсенчи, МТС-семпе совхозсенчи малта пыракан çынсем çине, çĕрĕçĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем çине таянмалла. Çавăн пек ĕçлеме эпир вĕренсе çитеймен-ха.

Кĕрешÿ ăнăçлăхне кучухнехи техникăна вĕренсе алла илнĕ, хăйсен ĕçне парăннă çынсем, кадрсем татса пани халĕ нуриншĕн те паллă. Анчах çавăн пек кадрсене вĕрентсе çитĕнтерме, вĕсене воспитани пама эпир сахал тăрăшнă.

Султан-çул çакăн пек картина тăсăлса пырать: уйрăм бригадăсем производство планне иртерсе тултараççĕ, колхозсен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Теприсем вара хăйсен планне пĕр çул та тултараймаççĕ, колхозсемпе государство умĕнче пысăк парăмра юлаççĕ. Çакă вăл социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçре формализм пулнинчен килнĕ.

Чăн та, партбюро юлашки вăхăтра трактор бригадисен, уйрăм механизаторсен ĕçне тĕплĕнрех сăнаса пĕлме тăрăшать. Çакă вăл пире бригадăсене вăхăтра пулăшма, малта пыракансен ĕçри опытне ытларах сарма май пачĕ.

Тырпул пухса кĕртме пуçăнсан пирвайхи кунсенче МТС-ăн чылай комбайнĕсемпе çителĕксĕр ĕçлени палăрчĕ. Эпир малта пыракан комбайнерсен ĕç опытне тĕпчесе пĕлсе, ăна пурин патне те çитерме мерăсем йышăнтăмăр. Н Спиридонов, В. Петров, М Артемьев тата ытти мастерсен опычĕсемпе паллаштарнă хыççăн çамрăк комбайнерсем те ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Паллах ĕнтĕ, ку вăл пĕр кун хушшинче туса иртермелли ĕç мар.

Çамрăк комбайнерсене социализмла ăмăртура чăтăмлă пулма воспитани парас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлеме тиврĕ. «Опытлă комбайнерсем пек ĕçлеме пултараймăп» тесе, пăрахса кайма шутлакансем те пулкаларĕç. Вĕсене техникăна алла илес тесен çине тăрса вĕренме кирли çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама, опытлă механизаторсен пурнăçри ÿсĕмĕпе паллаштарма тиврĕ. Çавăн пек мерăсем йышăннă хыççăн 19 комбайнертан 14-шĕ сезонти плана иртерсе тултарчĕç.

10-мĕш трактор бригади çулленех производство планне тултараймасăр юлатчĕ. Кунта механизаторсем пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене курман пек туса иртернĕ, хăйсен йăнăшĕсене хăюллăн тупса палăртас вырăнне, пытарса хăварма тăрăшнă. Çемьелĕх пуç пулса тăнă çĕрте ĕç лайăхланассине кĕтме çук.

Партбюро сĕннипе дирекци 10-мĕш бригадăна ертсе пыма Ф. Сергеев комсомольца уйăрса лартрĕ, эпир ăна бригадăра политикăлла воспитани ĕçне лайăхлатма пулăшрăмăр, ятарласа агитаторсем çирĕплетрĕмĕр. Нумай та вăхăт иртмерĕ, ку бригада ĕçĕ лайăхланма пуçларĕ. октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне бригада çулталăкри производство планне тултарчĕ.

Кадрсемшĕн тăрăшмалла, вĕсене хаклама пĕлмелле. Анчах ку вăл кадрсенчен ыйтассине чакарма, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене асăрхамасăр хăварма кирлине нимĕн чухлĕ те пĕлтермест. Парти пире коммунистсемпе кадрсене ĕçри çитменлĕхсемпе нихçан та килĕшмен çынсем пулма воспитани пама вĕрентет.

3-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Т. Степанов коммунист пирĕн МТС коллективĕнче чи хисеплĕ работниксенчен пĕри шутланать. Ăна бригадăна лайăх ертсе пыма пĕлнĕшĕн, трактор ĕçĕсен планне яланах срокчен тата иртерсе тултарнăшăн хисеплеççĕ.

Кăçал Степанов юлташ пĕр йăнăш турĕ, тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта, унăн айăпĕпе, комбайн ĕçне тĕрĕс мар шута илнĕ, туман ĕçе тунă пек кăтартнă.

Партбюро Степанов юлташăн авторитетне пăхса тăмарĕ, государство дисциплинипе çирĕппĕн пăхăнманшăн ăна парти енĕпе ответ тыттарчĕ, унăн йăнăшне тÿрлетрĕ.

Халĕ, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе пирĕн умра питĕ те пысăк задачăсем тăнă вăхăтра, механизаторсем умĕнчи требованисем чылай ÿсрĕç. Государство МТС-сене çĕнĕрен-çĕнĕ техникăпа пуянлатать, анчах умра йывăрлăхсем пуласси çине уççăн пăхма пĕлмелле. Колхоз производствин чи кирлĕ отраслĕсене, уйрăмах обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çĕрулмипе тымарçимĕçсем, пахча çимĕç, техникăлла культурăсем туса илес ĕçсене механизацилесе çитересси çăмăлах пулас çук. Пирĕн çав йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлмелле.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн решенийĕсем çинчен, ялхуçалăхне аталантарас ĕçĕн халех татса памалли задачисем çинчен ăнлантарса пама партбюро трактор бригадисене 16 агитатор уйăрса ячĕ. Вĕсенчен 12-шĕ коммунистсем, ыттисем—комсомолецсемпе партире тăман работниксем. Агитаторсемпе виçĕ хутчен канашлу иртертĕмĕр, Пленум решенийĕсем тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе партин Центральнăй Комитечĕ «МТС-сен ĕçне малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пирки каласусем иртерме методикăлла кăтартусем патăмăр.

Хальхи вăхăтра МТС ответлă тапхăра кĕчĕ—тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕç пуçланчĕ. Çитес çуракине пур енчен те кăтартуллă хатĕрлесе çитмелле тăвасси—пуçламăш парторганизацин чи кирлĕ задачи пулса тăрать

Пирĕн коллектива çĕнĕ вăйсем хутшăнчĕç, колхозсенче ялхуçалăх специалисчĕсен йышлă отрячĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Коммунизм ĕçне парăннă механизаторсемпе специалистсем социализмла ялхуçалăхне хăватлăн аталантарассишĕн, совет халăхĕ валли апат-çимĕç, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕсем валли чĕртавар çителĕклĕх парса тăмалла тăвассишĕн хĕрÿллĕн кĕрешеççĕ.

И. СЕМЕНОВ,
МТС-ри партбюро секретарĕ.

Тракторсемпе машинăсене пысăк пахалăхпа юсатпăр

МТС-ри пуçламăш парторганизацин уçă пухăвĕнче, партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен сÿтсе явнă чухне, пирĕн коммунистсем тата партире тăман механизаторсемпе служащисем машина-трактор паркне яланах юсавлă тытас, ăна техника енĕпе тĕрĕс пăхса усрас ыйтусем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕç.

Эпир кăçал тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене юсас ĕçе лайăхрах организацилеме, çапла вара çитес çул вĕсемпе тата тухăçлăрах ĕçлемелле тума йышăнтăмăр.

Юсав ĕçĕсем пуçланиччен эпир МТС-ри мастерскоя пур енчен те хатĕрлесе çитерме чылай вăй хутăмăр Уаловой месслетне тухăçлă ĕçлеме 29 ĕç вырăнĕ хатĕрлерĕмĕр, механизмсемпе оборудовани çителĕклĕ.

Тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕç, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал чылай йĕркеллĕрех пуçланчĕ. Механиксемпе трактористсем ĕç графикне иртерсе тултарасшăн мĕнпур вăя хурса тăрăшаççĕ.

С. Агапов юлташ ертсе пыракан бригада ялхуçалăх çулне пысăк ÿсĕмпе вĕçлерĕ, хăйĕн производство планне иртерсе тултарчĕ. Халĕ бригадăри механизаторсем МТС мастерскойĕнче пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Агапов юлташа, вăл опытлă работник пулнине шута илсе, чи ответлă узелта ĕçлеме çирĕплетрĕмĕр. Вăл топливо аппаратурине, çу насосĕсене тĕрĕслет, карбюраторсене тата электрооборудовани юсас ĕçсене ертсе пырать. Пирвайхи кунтан тытăнсах вăл хăйĕн ăсталăхне палăртрĕ.

Октябрь уйăхĕнчи график тăрăх пирĕн мастерскойра 3 трактора юсаса пĕтермеллеччĕ. Ку график пирĕншĕн пĕчĕкрех пулчĕ, октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне эпир 6 трактор юсаса кăлартăмăр Çавна май малашнехи график çинчен те тĕплĕн шухăшласа пăхма тиврĕ. 4-мĕш кварталта пирĕн пурĕ 28 трактор юсамалла. Ку план пирĕншĕн пĕчĕкрех тесе шутлатпăр. Малта пыракан механизаторсен опычĕ тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе чылай хăвăртлатма май пуррине кăтартса парать.

И. КОНОЧКИН,
МТС главнăй инженерĕ, партбюро членĕ.

Ăста кадрсем пулаççĕ

Партипе правительство пирĕн ĕç. пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма пысăк решенисем йышăнчĕç. Тракторист Михаил Петров кашни сменăра ĕç нормине иртерсе тултарать, çавăншăн ăна 6,5 ĕçкунĕ тÿлеççĕ. Çĕнĕ постановлени тăрăх, Петров юлташ пĕр сменăра 45 тенкĕ укçа тата 19,5 килограмм тырă ĕçлесе илет. Ытти трактористсемпе плугарьсен, комбайнерсемпе машинистсен ĕç укçи те нумай ÿсрĕ.

Бригадăри механизаторсем хушшинчи социализмла ăмăрту çĕнĕ хăватпа сарăлчĕ. Юлашки вăхăтра, çанталăк условийĕсем чăрмантарчĕç пулин те, сменăри нормăна тултарманни пĕр тракторист та пулмарĕ.

Пирĕн бригада хăйĕн çулталăкри производство планне паянхи кун тĕлне 108 процент тултарчĕ Эпир кунпа лăпланса тăмастпăр. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ механизаторсем умне пысăкрах та ответлăрах задачăсем лартрĕ, çĕрĕçпе, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçе ытларах механизацилемелле. Чăн та, çав отраслĕсене механизацилеме пирĕн бригадăра кучухнехи машинăсем çитмеççĕ-ха. Анчах эпир хальхи техникăпа та колхозсене пысăк ĕçсем туса пама пултаратпăр.

Иртнĕ хĕлле эпир хамăр ĕçлекен «Красный Октябрь» тата «Сталинцы» колхозсене выльăх-чĕрлĕх витисем тума строительство материалĕсем турттарса патăмăр. Колхозсем çав материалран кăçал лайăх витесем туса лартрĕç. Пĕлтĕрхи опыта шута илсе, эпир кăçал колхозсене строительство материалĕсем, минераллă удобренисем тата нумайрах турттарса пама палăртрăмăр.

Пирĕн бригадăри трактористсем хăйсен аллине шанса панă техникăпа тĕрĕс усă курма тăрăшаççĕ. Султалăкри плана иртерсе тултартăмăр пулин те, бригадăри тракторсем пурте юсавлă, çитес çуракине пуçăнма хатĕр тăраççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен сÿтсе явнă хыççăн бригадăри механизаторсем хăйсен пĕлĕвне тата ăсталăхне малалла ÿстерме йышăнчĕç. М. Степанов, В. Дмитриев, Б. Иванов комбайнерсем халĕ механиксем пулма вĕренеççĕ. Çамрăк трактористсемпе плугарьсем, пурĕ 8 çын, Канашри училищĕне вĕренме кайрĕç. Çапла ĕнтĕ, малашне пирĕн бригадăра пĕтĕмпех квалификациллĕ механизаторсем пулаççĕ.

Т. СТЕПАНОВ,
3-мĕш бригада бригадирĕ.

Машина-трактор станцине ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсем хăйсен специальноçĕпе ĕçлеме килнĕ. Вĕсем хушшинче Совет Çарĕнчен таврăннă воинсем те пур.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Совет Çарĕнчен таврăннă, халĕ участковăй механик пулса ĕçлекен Г. К. Гусев тата П. И. Соболев тракторист трактор моторне юсаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Колхоз производствин организаторĕсем

Агроном М. Крюков каласа пани

Эпĕ 1936 çулта Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, çĕрĕç органĕсенче ĕçлесе пурăнтăм.

Сахал мар çăмах тиветчĕ пире. Ялхуçалăхне малалла аталантарас ĕçре хамăр пуçарулăха палăртманшăн, колхоз производствин организаторĕсем пулайманшăн пире тивĕçлипе ÿпкелетчĕç. Колхозсене агрономипе зоотехника енчен пулăшу памалли йĕрке тĕрĕс мар пулнă пирки эпир, чăннипе илсен, колхоз производствинчен инçетре тăнă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çав тĕрĕс мар йĕркене пĕтересси, МТС-сенче яланах колхозсенче ĕçлекен агрономсемпе зоотехниксем пулмалла, кашни колхозра специалистсем ĕçлемелле тăвасси çинчен йышăннă решение эпир, çĕрĕç органĕсенчи работниксем, пысăк кăмăлпа йышăнса илтĕмĕр.

Эпĕ—КПСС членĕ. Пленум решенийĕсемпе паллашнă хыççăнах, хамăн шухăшкăмăлăм çинчен пĕлтерме парти райкомне кайрăм. Райком работникĕсем мана Жданов ячĕпе тăракан колхоза кайма сĕнÿ пачĕç.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем мана ăшшăн кĕтсе илчĕç. Халĕ эпĕ хамăн çемьепе лайăх хваттерте пурăнатăп, ĕнепе ытти выльăхсене усрама та пулăшу пачĕç.

Халĕ ĕнтĕ агрономипе зоотехника вĕренÿпине, наукăпа практика çитĕнÿвĕсене, малта пыракан опыта колхозра тÿрремĕнех пурнăçа кĕртессишĕн специалистсемпе колхозниксем тата механизаторсем алла-аллăн тытăнса ĕçлеме лайăх условисем пулса тăчĕç.

Колхозра ĕçлеме пуçласанах эпĕ унăн экономикине тарăнрах тĕпчесе пĕлес тĕллев тытрăм, хуçалăх отраслĕсенче ĕçлекен тата ертсе пыракан работниксемпе паллашрăм.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз Çĕрпÿ районĕнче начаррисен шутĕнчех тăмасть, государство умĕнчи обязательствăсене çулленех пурнăçласа пырать, уй-хир ĕçĕсене иртерес енĕпе те ыттисенчен инçете юлмасть. Анчах унăн обществăлла хуçалăхĕ ытла та майĕпен аталанать, укçа-тенкĕ тупăшĕ питĕ сахал, çавна пула колхозниксем те йывăрлăхсем тÿссе иртереççĕ.

Колхоз хуçалăхĕн отраслĕсене аталантармалли çăлкуçсемпе вăйсем çителĕклех. Чи пысăк вăй вăл—колхоз стройне вĕçĕмсĕр парăннă колхозниксен анлă массисем, коммунизм ĕçĕ çĕнтерессине чунчĕререн ĕненнĕ кадрсем. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен тулăх пурнăçĕн çăлкуçне — обществăлла хуçалăха тĕреклетессишĕн тăрăшса ĕçленине курса чун савăнать, вĕсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшас килет.

Пирвайхи кунсенчех кунта тĕрĕс мар шухăшлă çынсемпе те тĕл пулма тÿре килчĕ. Правлени председателĕ Ф. Максимов юлташ—ялта хисеплĕ çын. Анчах унăн малта пыракан опыта, наукăпа техника çитĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пĕлÿ çитмест. Вăл колхозниксен харпăр хăй интересĕсене обществăлла интереспа тĕрĕс сыхăнтарма пĕлменни те палăрчĕ. Çав çитменлĕхсене вăл халĕ хăй те йышăнать.

Колхозри пуçламăш парторганизаци те тĕрексĕр-ха. Колхоз производствине аталантарас ыйтусене татса парас ĕçе вăл активлă хутшăнаймасть. Парторганизаци секретарĕ П. Семенов юлташ выльăх апачĕ акса тăвакан бригада бригадирĕ пулса ĕçлет. Анчах вăл колхозра выльăх апачĕн никĕсне тĕреклетессишĕн, çав никĕс çинче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн хăй те çине тăрса кĕрешмен.

Иртнĕ çуркунне колхозра 8 гектар çине выльăх кăшманĕ акса хăварнă, анчах ăна лайăх пăхса ÿстерессишĕн тăрăшакани пулман. Çавна пула савăр гектар çинчен нимĕн чухлĕ те кăшман пухса илеймен. Пуçламăш парторганизаци колхоза ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешекен çирĕп вăй пулса тăрайман-ха. Ăна парти райкомĕ енчен ытларах пулăшни кирлĕ.

Колхозра манăн ĕçри юлташсем те халĕ сахал мар ĕнтĕ, малашне тата йышлă пулассине шанатăп. Активпа таччăн çыхăнса, ун çине таянса ĕçлекен коммунист кăна хăйĕн умне парти лартнă пысăк задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пултарать.

Правленипе пĕрле артель хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе сывăх вăхăтра тумалли мероприятисем палăртма тытăнтăмăр. Чи малтан, нумай çул ÿсекен курăксем акăнакан пусуçаврăнăшне пурнăçа кĕртсе çитересси, ку ĕçре тунă йăнăшсене тÿрлетесси çинчен тĕплĕн сÿтсе яврăмăр.

Колхозра вырăнти тата минераллă удобренисемпе халиччен çителĕксĕр усă курнă, ялтан 4—5 километрти участоксем çине тислĕк кăларма пăрахнă пулнă. Инçетри уйсене тислĕк нумай турттарма туртăм вăйĕ çитмест, çавăнпа та тракторсемпе ытларах усă курма тивет. Трактортан кăкармалли пĕр çуна пур, манăн сĕнÿпе килĕшсе, тата икĕ çуна тума йышăнчĕç. Суракă валли пысăк пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлесси çинчен калаçса татăлтăмăр. Агротехника курсĕ ĕçлеме тытăнать.

Жданов ячĕпе тăракан колхозра пĕртен-пĕр агроном çеç ĕçлет-ха, ытти специалистсем çук. Зоотехника вĕрентĕвне пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре агроном умне йывăрлăхсем тухса тăма пултараççĕ. Паллах ĕнтĕ, вĕренме, опыт пухма тивет. Анчах çак наукăна вĕренсе алла илес ĕçре пире пулăшу кирлĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çакăн пек кăтарту пачĕ: ялхуçалăх специалисчĕсемпе, трактор тата уй-хир бригадисен бригадирĕсемпе уй-хир ĕçĕнчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксемпе шултра хуçалăха тытса пымалли агротехникăпа зоотехникăн çĕнĕ, малта пыракан майĕсене, меслечĕсене вĕрентме тăтăшах семинарсем иртермелле. Çак ĕçе часрах пуçарса ярсан, пуриншĕн те усăллă пулĕччĕ.

Партипе правительство мĕнпур колхозниксене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене ялхуçалăхне малалла аталантарас задачăна пурнăçа кĕртмешкĕн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме тата хăйсен творчествăлла пуçарулăхне сарса яма чĕнчĕç. Эпир, ялхуçалăх специалисчĕсем, хамăр çине хунă пысăк шанăçа тÿрре кăларассишĕн вăйсене хĕрхенсе тăмăпăр.

Ĕçе лайăхлатмалли майсем

Вăрçă хыççăнхи çулсенче, партипе правительство пулăшнипе, пирĕн МТС та кучухнехи хăватлă техникăпа пуянланчĕ. Çакă вăл колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене султан çул ытларах механизацилеме, çав никĕс çинче çĕрĕç тата выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç культурисене хăпартса пыма май парать.

МТС колхоз стройĕн материаллă-техникăлла никĕсĕ, колхоз производствинче ĕç ăнăçлăхне татса паракан вăй пулса тăнине çак цифрăсенчен те лайăх куратпăр: пирĕн МТС хăйĕн машина-трактор паркĕн вăйĕпе районти колхозсенче кăçалхи 10 уйăх хушшинче, 1945 çулхипе танлаштарсан, 4.2 хут нумайрах ĕç туса панă. Ирхипе кĕрхи çĕртме тăвас, кĕрхи тырăсем акас ĕçсене районти колхозсенче 100 процентпĕлех механизациленĕ.

Материаллă-техникăлла никĕс тĕреклennĕ май, МТС колхоз производствинчи нумай ĕçсене ытларах механизацилеме тăрăшать. Халĕ эпир колхозсене, пĕтĕмĕшпе илсен, 50 ятăн тĕрлĕ ĕçсем туса паратпăр.

Механизаторсем хăйсен аллине шанса панă техникăпа тĕрĕс ĕçлеме вĕренсе пыраççĕ. Кăçал тракторсен паркĕ нумаях хутшăнмарĕ пулин те, трактор бригадисем колхозсене, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 14 пин гектар сухаланă чухлĕ нумайрах ĕç туса пачĕç.

Пирĕн ĕçре пирвайхи ÿсĕмсем пур, анчах вĕсемпе лăпланса тăма шутлани пысăк йăнăш пулĕччĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ машина-трактор станцийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ, вĕсене кĕске вăхăтра пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн умма пысăк задачăсем лартрĕ. Эпир хамăр алла панă хăватлă техникăпа çителĕксĕр усă куратпăр-ха. Тракторсем тата ытти машинăсем уй-хир ĕçĕсене тунă вăхăтра ĕçсĕр тăни халĕ те пысăк процент йышăнать. Сăмахран, кăçал вунă уйăх хушшинче МТС тракторĕсем колхозсен тата механизаторсен айăпĕпе, пĕтĕмĕшпе илсен, пурĕ 2.600 смена хушши ĕçсĕр тăрса иртернĕ. Çав вăхăт хушшинче вĕсем сахалтан та 13 пин гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума, çулталăкри производство планне иртерсе тултарма пултарнă.

Хамăр ĕçсен халичченхи итогĕсене тĕплĕн анализ тусан, эпир трактор бригадисен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалли, государство укçа тенкине нумай перекетлемелли пысăк резервсемпе çăлкуçсене куратпăр. Кунта эпир МТС-ра малта пыракан, пĕр-пĕринпе ăмăртакан икĕ бригада мĕнле ĕçленине пĕтĕм МТС ĕçĕпе танлаштарса пăхăпăр.

1952 çулта трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакĕ, администрацийĕпе хуçалăх расхочĕсене хушса шутламасăр, сухалани çине куçарса шутласан, кашни гектар пусне çакăн чухлĕ ларнă:

	Планпа	Чăннипе
Пĕтĕм МТС-ĕпе	23 т. 02 п.	23 т. 17 п.
Т. Степанов юлташ бригадинче	18 т. 61 п.	15 т. 92 п.
В. Баранов юлташ бригадинче	21 т. 17 п.	18 т. 29 п.

Ку таблицăран çакă курăнать: Степанов юлташ бригадинче трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакĕ, пĕтĕм МТС-рипе танлаштарсан, кашни гектар пусне 7 тенкĕ те 25 пус, Баранов юлташ бригадинче 4 тенкĕ те 88 пус йÿнĕрех пулнă.

Пур бригадăсем те Степанов юлташ бригади пек тухăçлă тата перекетлĕ ĕçленĕ пулсан, эпир МТС-ĕпе иртнĕ çулта трактор ĕçĕсен хакне пĕтĕмпе 200 пин тенкĕлĕх ытла йÿнетме пултарнă. Эпир çавăн пек резервсене тупса палăртма тата вĕсемпе усă курма вĕренсе çитеймен-ха.

Маларах асăннă бригадăсем мĕнле майпа тухăçлă ĕçлеме пултарнă? Чи малтан, вĕсем тракторсемпе ытти машинăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсанине, техника енĕпе тĕрĕс пăхса тăнине, тирпейлĕ тытталанине палăртмалла.

Степанов юлташ ертсе пыракан бригада иртнĕ çулта производство планне чылай иртерсе тултарчĕ, анчах тракторсемпе ытти машинăсене лайăх пăхса усранипе вĕсене юсама та кирлĕ пулмарĕ. Çавна май бригада тракторсемпе ытти машинăсене юсама каякан расходсене пурĕ 8 пин тенкĕ перекетлесе хăварчĕ. Кăçал та ку бригада пысăк çитĕнÿ турĕ, трактор ĕçĕсен планне вăл 108 процент тултарчĕ, апла пулин те унăн пур машинисем те юсавлă тăраççĕ.

Малта пыракан механизаторсен лайăх опытне тĕпчесе вĕренес, ăна пурин патне те çитерес, хăвăртрах ĕçе кĕртес тĕлĕшпе дирекципе пуçламăш парторганизаци халиччен çителĕксĕр тăрăшнă.

Тепĕр тĕслĕхе илетĕп. Тырпул пухса кĕртес ĕçе эпир ытла та сахал механизациленĕ. Сăмахран, кăçал пĕрчĕллĕ тырăсенчен тата нумай çул ÿсекен курăк вăрлăхĕсенчен 33 процентне çеç комбайнсемпе пухса кĕртнĕ. Çакăншăн пире колхозсем тивĕçлипе ятлаççĕ.

Техникăна лайăх вĕренсе алла илнĕ механизаторсен опычĕ комбайнсен ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерме май пуррине кăтартса пачĕ. МТС-ра пилĕк комбайнер кăçал самоходнăй комбайнсемпе кашни 400 гектартан пуçласа 495 гектар таран тырпул пухса кĕртме ĕлкĕрчĕç. Анчах, пĕтĕм МТС-ĕпе илсен, 15 футлă комбайнсем çине куçарса шутласан, кашнинпе вăтам шутпа 245 гектар çинчи тырпула çеç пухса кĕртнĕ. МТС-ри 21 комбайнран кашнинпе 400 гектар çинчи тырпула пухса кĕртсен, эпир çав кăткăс ĕçе районĕпе 50 процент таранччен механизациллеме пултарнă. Пирĕн ĕçри çавăн пек пысăк резервсене сахал мар кăтартса пама пулĕччĕ.

Партипе правительство МТС-сен ĕçне малалла лайăхлатма, вĕсен материаллă-техникăлла никĕсне вăйлатма, квалификациллĕ механизаторсен, специалистсен кадрĕсене тĕреклетме мерăсем йышăнчĕç, Пирĕн МТС-ра та халĕ çĕнĕ вăйсем хутшăнса пыраççĕ. Нумай механизаторсем, МТС-ран тĕрлĕ сăлтавсемпе тухса кайнăскерсем, трактор бригадисене каялла таврăнаççĕ. Районти колхозсенче ĕçлеме халĕ 22 агроном тата 6 зоотехник уйăрса янă. Çак кунсенче МТС-а çĕршыври заводсенчен çĕнĕ машинăсемпе оборудовани килсе çитесси кĕтетпĕр.

Анчах малашне пирĕн ĕçсем хăйсене хăйсемех лайăхланса пырĕç, тесе кĕтни йăнăш пулĕччĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановлени пире МТС ĕçне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешме, колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене механизацилес ĕçре унăн пĕлтерĕшне ÿстерсе пыма хушать.

Пленум йышăннă решенисене пурнăçласа, халĕ пирĕн уйрăмах выльăх-чĕрлĕхе пăхас, çĕрулмипе тымарçимĕçсем акса ÿстерес тата пухса кĕртес ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе нумай вăй хумалла. Фермăсенчи ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе Çĕрпÿ районĕ кайра тăрать. Пурĕ 29 колхозран 17-шĕнче çеç халиччен кормозапарниксемпе усă курнă.

Уйрăм колхозсем халĕ фермăсене шыв кĕртессине, апат хатĕрлессине механизацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума тытăнчĕç. «Коммунар» колхозра, МТС механикĕсем пулăшнипе, ĕне тата сысна фермисене шыв кĕртме водопровод хывса çитереççĕ. Хрущев ячĕпе тăракан колхозра, тарăн çырмара тунă çăлри шыва двигатель вăйĕпе хăпартса, ĕне фермине кĕртмелле тăваççĕ. Запарник вырнаçтарса лартма заявка паракан колхозсем нумайланчĕç.

Фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилесси халĕ те çителĕксĕр пырать. Хăшпĕр колхозсенчи руководительсем хăйсем чăрмантарса тăни те пулкалать. «Пивильстрой» колхозра иртнĕ çултах ĕне фермине шыв кĕртме водопровод тунăччĕ. Кăçал унта ĕнесене шăвармалли автопоилкăсем туянчĕç. Вĕсене вырнаçтарса пама пирĕн механиксем хатĕр, анчах колхоз председателĕ И. Иванов юлташ витере кормушкăсем тутарма вăй тупаймасть.

Ялхуçалăх наукисен çитĕнĕвĕсем çинчен, малта пыракан опыт çинчен пропаганда тăвасси, вĕсене колхоз производствинче ĕçе кĕртсе пырасси МТС-ри механизаторсемпе специалистсен пысăк тивĕçĕ пулса тăчĕ. Анчах эпир ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Сăмахран, колхозсене эпир çĕрулми 263 гектар лартса патăмăр, анчах тăваткал тĕмĕн пĕр колхозра та лартмарĕç, йăрансен хушшине кăпкалатас ĕçе механизацилемен пирки вĕсем нумай пиншер пăт çĕрулми туса илеймерĕç. Çĕрулмипе тымарçимĕçсене, пахча çимĕçсене тăваткал тĕмĕн акса тăвас ĕçе анлăн пуçарса яни колхозсен тупăшне ÿстермелли, выльăх апачĕн никĕсне тĕреклетмелли пысăк çăлкуçĕ пулса тăрать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление пĕр кăмăлпа ырласа, пирĕн механизаторсемпе специалистсем ĕçре пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн çĕнĕ хăватпа тăрăшаççĕ. Партипе правительство лартнă аслă задачăсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн пирĕн коллектив социализмла ăмăртăва анлăрах сарса пырĕ.

Д. ГУРЬЕВ,
МТС директорĕ.

Китайри гидротехника строительстви

ПЕКИН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Гуанминжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче, Хуньхэ юханшывĕн вăтам пайĕнче, Фушунь çывăхĕнче (Сурçĕр-Хĕвелтухăç Китай), пысăк Дахофан водохранилищĕн строительстви пуçланнă. Ку хранилище Китайри иккĕмĕш питĕ пысăк сооружени пулать.

Строительствăн пĕррремĕш черетĕнче 41 метр çÿлĕшĕ тата 1.367 метр тăршшĕ плĕве тата ытти чылай сооруженисем тумалла. Çак ĕçсене 1956 çулта вĕçлесçĕ. Строительствăн пĕррремĕш черетне туса пĕтернĕ хыççăн водохранилищĕн калăпăшĕ 1.859 миллион кубометр пулмалла. Ĕçсен иккĕмĕш черетĕнче энергетика тата çĕре шăвармалли тĕллевсем валли чылай гидротехника сооруженийĕсем туса лартаççĕ.

Строительствăра кучухнехи хăватлă строительство техники — экскаваторсем, грейдерсем, бульдозерсем, самосвалсем тата ытти машинăсем те ĕçлеççĕ.

ПОЛЬШАРИ ĔÇÇЫННИСЕМ ПРОИЗВОДСТВО ЗАДАНИЙĔСЕНЕ СРОКЧЕН ТУЛТАРАÇÇĔ

ВАРШАВА, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинчи промышленность предприятийĕсемпе стройкăсенче çулталăкри производство планĕсене срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăрту сарăлсах пырать.

Çĕр кăмрăк промышленноçĕнче «Готвальд» тата «Пяст» шахтăсем кăçалхи производство планне тултарнă. «Пяст» шахта коллективĕ юлашки çичĕ уйăх хушшинче планран ирттерсе 52 пин тонна яхăн çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Çак çул вĕçлениччен малта пыракан шахтăсенчи горнякcем тăван çĕршыва планран ирттерсе вуншар пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларса пама пулнă.

Хими промышленность министерствин искусственнăй материалсен центральнăй управленийĕн предприятийĕсем те 1953 çулхи плана срокчен тултарнă. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче предприятисенче 44 тĕрлĕ çĕнĕ продукци туса кăларма вĕреннĕ тата вĕсене йышлăн туса кăларма пуçланă. Çак çул вĕçлениччен предприятисем çĕршыв валли планран ирттерсе 60 миллион злотыйлăх продукци туса кăлараççĕ.

«Бытом», «Пуцк», «Ярослав Домбровский», «Мархлевский» тата ытти сутуилу судниесен командисем 1954 çулхи план шучĕпе ĕçлеççĕ.

Болгарире машинăсем туса кăларас ĕç аталанать

СОФИЯ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕн çулĕсенче Болгарире машинăсем туса кăларас ĕç анлăн аталаннă. Ĕлĕкхи сурма кустарлă кивĕ мастерскойĕсем вырăнĕнче çĕнĕ заводсем ÿссе ларнă. Вĕсем çĕршыв валли машинăсемпе оборудовани кирлĕ таран туса кăларма тăрăшаççĕ.

Халĕ Болгарири машинăсем тăвакан заводсем ялхуçалăхĕнче кирлĕ мĕнпур машинăсене тенĕ пекех туса кăлараççĕ. Русе хулинчи Георгий Димитров ячĕпе тăракан завод 26 тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем туса кăларма пуçланă. «Будущее» ятлă машинăсем тăвакан завод вăрлăх тасатмалли машинăсем, çĕр мамăкĕ акмалли сеялкăсем тата ытти машинăсем те туса кăларать. Антон Иванов, Георгий Димитров ячĕпе тăракан тата запаслă чаçсем тăвакан завод çĕршыври ялхуçалăхĕ валли тракторсемпе ялхуçалăх машинисен пиншер тĕрлĕ запаслă пайĕсене туса кăлараççĕ.

Ялхуçалăх машинисем тăвакан заводсем кăçал чылай çĕнĕ машинăсем туса кăларма тытăннă. Çулла Болгарире пĕрремĕш комбайн туса хатĕрлесе ăна сăнаса пăхнă, канал чавакан машинăсем. вăрлăх тасатакан машинăсем пĕрремĕш хут туса кăларнă. Заводсенче Совет Союзĕнчи пек машинăсене—кăшман пухса кĕртекен комбайна тата çĕр мамăкĕ пухакан комбайна туса кăларас ĕçе вĕренсе пыраççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан сăрт-ту оборудованийĕн завочĕ, Георгий Кирков ячĕпе тăракан хурансем тăвакан завод, государствăн металл касакан станоксем туса кăларакан завочĕ, транспортпа строительство машинисем туса кăларакан «Красная звезда» завод тата инструментсем туса кăларакан «Большевик» завод Болгарири машиностроени промышленноçĕн мухтавĕ пулса тăраççĕ.

1949 çултан пуçласа 1953 çулччен Болгарири машинăсем тăвакан заводсем 400 тĕрлĕ çĕнĕ йышши машинăсем туса кăларнă. Болгарири нумай çĕнĕ стройкăсене çĕршывра туса кăларнă оборудовани парса тăраççĕ. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн çулĕсенче çĕршыври металран япаласем туса кăларакан промышленноçăн продукцийĕ, 1948 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут, 1939 çулхипе танлаштарсан, 5 хут ÿснĕ.

ИТАЛИРИ ĔÇÇЫННИСЕМ ПРОИЗВОДСТВĂНА ЧАКАРСА ПЫНИНЕ ХИРĔÇ КĔРЕШЕÇÇĔ

РИМ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат çапла пĕлтерет: ноябрĕн 17-мĕшĕнче Флоренцири «Пиньона» ятлă металлурги заводĕнчи 1.700 рабочи, завод хуçисем предприятие хупма йышăннине хирĕç протестлесе, завод çурчĕсене йышăннă. Рабочисен пухăвĕнче ним тăхтаса тăмасăр заводри мĕнпур цехсене тепĕр хут ĕçлеттерме тытăнма решени йышăннă.

Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ

БЕРЛИН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ Демократиллĕ Германи Республикинче нимĕç халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕрипе килĕштерсе пурăнассине малалла тĕреклетсе пырас тĕллевпе иртет. Республикăри хуласемпе ялсенче икĕ эрне хушши ĕнтĕ уйăхлăх ячĕпе тĕрлĕрен ĕçсем туса ирттереççĕ. Пур çĕрте те совет ученăйĕсем, новаторсемпе культура представителĕсем Демократиллĕ Германи Республикин общественноçĕпе тĕл пуласcине организацилеççĕ.

Ĕççыннисем уйрăммăнах Свешников ячĕпе тăракан хора ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Сăмахран, Эрфурт хулинче çак хор вырăс юррисене юрласа панине итлеме хулари ĕççыннисем 8 пин çынна яхăн пухăннă.

Нимĕç общественноçĕ Сталинла премин лауреачĕ РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ С. Н. Шапошников тухса юрланине питĕ интересленсе тата ăшшăн кĕтсе илет. С. Н. Шапошников Шуберт произведенийĕсене юрласа панине ĕççыннисем уйрăмах юратса итлеççĕ.

Потсдамра В. Ивановăн «Бронепоезд 19-69» ятлă пьесине лартса панă. Совет халăхĕн граждан вăрçи çулĕсенчи пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен çырнă пьесăна куракансем питĕ интересленсе тата ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Çак кунсенче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин Берлинри центральнăй çуртĕнче хресченсемпе ялхуçалăх шкулĕсенче вĕренекенсем умĕнче Сталинла премин лауреачĕ Свирщевский профессор тухса каланă. Совет ученăйĕ социализмла ялхуçалăхĕ тунă çитĕнÿсем çинчен тата ялхуçалăхне механизацилени çинчен каласа панине тĕлпулура пулнисем питĕ интересленсе итленĕ.

Демократиллĕ Германи Республикинчи округсемпе районсенче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин вырăнти комитечĕсем Совет Союзĕн пурнăçĕ çинчен, вăл коммунизмла общество строительствинче тунă çитĕнÿсем çинчен каласа паракан выставкăсем организацилеççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин мĕнпур кĕтесĕсенчен Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществине çĕнĕ членсем кĕни çинчен пĕлтернисем килеççĕ. Карл-Маркс-Штадт округĕнче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕн малтанхи кунĕсенче 4 пин çын ытла общество членне кĕнĕ.

Францири „Комба" хаçат "Европа çарне" тăвассине хирĕç тăрать

ПАРИЖ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Францири общественность «Европа çарĕ» текенскерĕ тăвасси çинчен хатĕрленĕ проекта хытă протестлет. Ку тĕлĕшпе «Комба» хаçат пичетленĕ «Наци драми» ятлă статьяна илсе кăтартни вырăнлă.

Ку статьяра, уйрăммăн илсен, çапла çырнă: «Франци халăхне суяпа, пулма пултарайман ĕçсемпе тата интересленекен енĕсен пропагандипе пăтраштарма май килмерĕ пулсан, Европа çарĕ кăларса тăратнă ыйту, Дрейфус ĕçĕ тарăхтарнă пекех, вăйлă тарăхтарма пултарать».

Хаçат малалла Европа çарне «тискер япала» тесе ят парать. «Вăл çар пентагона (США-н çар ведомстви.—Ред.) пехота тăратма кăна кирлĕ Пентагона пехота крестовăй поход валли кирлĕ пулать. Унсăр пуçне хаçат çапла шутлать: «Европа çарĕ» вăл—«Франци çарĕ йăхсăртĕпсĕр пĕрлешÿре çухалса каясси. «Европа çарĕ» Америкăн генеральнăй штабне пăхăнса тăрать».

Хаçат малалла çапла кăтартса парать: пирĕн руководительсем «Европа çарĕ» тунине килĕшме хушакан сăлтавсене кăлăхах шыраççĕ. Ун пек сăлтавсем çук. Пĕр шухăш кăна пур: Европа çарĕ усал ĕçех пулса тăмасть, мĕншĕн тесен вермахт тепĕр хут çĕкленни чи пысăк усал ĕç пулса тăрĕ. Ку вăл Германие хĕçпăшаллантарассине хирĕç тăмалли тĕлĕнмелле меслет пулса тăрать. Германие хĕçпăшаллантарасси Франци çарĕ пĕтсе пынипе пулса пымалла. Çак «ытлашши усал ĕçех мар» тени, чăннипе илсен, чи пысăк усал ĕç пулса тăни камшăн паллă мар пулĕ? Мĕншĕн тесен пирĕн интересcемпе пирĕн пултарайманлăха пула, вăрçă пĕтнĕ хыççăн 8 çултан Германие хĕçпăшаллантарасси пулма пултаракан ĕç пулса тăчĕ. Авантюрăна кĕрсе ÿкменни пуринчен те лайăхрах пулнă пулĕччĕ. Германи пире вăл авантюрăна мĕнле пулсан та сĕтĕрет, вăл хăйĕн аллинче пулнă çĕршывсене тепĕр хут тытса илме тăрăшать. Европа çарĕн проекчĕн авторĕсем, хăйсен пĕтсе лармалли ĕçĕшĕн тăрса, çак хăрушлăха туясшăн мар. Анчах вăл хăрушлăх питех те пысăк».

ФРАНЦИН НАЦИ ПУХĂВĔНЧЕ

ПАРИЖ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Наци пухăвĕнче Франци правительствин тулашри политикине сÿтсе явма пуçланă. Депутатсен Франци «Европăри политикăлла пĕрлешÿ» текенскерне хутшăнас ыйту тăрăх хăйсен шухăшне каласа памалла. «Европăри политикăлла пĕрлешÿвĕн» планĕ «Европа правительствине», «Европа парламентне» тата «Европа çарне» тума палăртать.

Депутатсем «Европăри власть органĕсене» тăвасси çинчен тунă договор проектне сÿтсе явмаççĕ. Вĕсен Европăри улттă çĕршыва (Францие, Италие, Хĕвеланăç Германие, Бельгие, Голландие тата Люксембурга) «пĕрлештерес» ыйту пирки хăйсен пĕтĕмĕшле шухăш-кăмăлне кăна каласа памалла.

Францин Наци пухăвĕн ĕнер кăнтăрла тата каçхине пулнă ларăвĕсенче тĕрлĕ партисенчен чылай депутатсем тухса каланă. Пренире чи малтан Адольф Омеран генерал («независимăй») тухса каланă. Вăл «Европăри оборона пĕрлешĕвне» хирĕç татăклăн тăнине пĕлтернĕ. Социалистсен партийĕн депутачĕсем Жакэ, Деффер, Гуэн, Ле Бай, çавăн пекех МРП членĕ—Кост-Флорэ депутат çÿлте асăннă проектсене хÿтĕлесе тухса каланă. Вĕсем Парижра тунă çар договорĕ Францин хăрушсăрлăхне тума пулăшакан тата вăрçа чарса тăракан хатĕр пулса тăрать тесе ĕнентерме тăрăшнă

«Европăри оборона пĕрлешĕвне» хирĕç тăракансем социалистсен партийĕн депутачĕсен сăмахĕсене хирĕç нумай сăлтавсем илсе кăтартнă. Вĕсем çакна кăтартса панă: Парижра тунă договор Францишĕн питĕ пысăк хăрушлăх пулса тăрать, Германи реваншисчĕсене Европăра пуç пулса тăма май парать.

«Социальнăй ĕçсен республикăри союзĕн» представителĕ Гастон Палевский çапла каланă: «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă договор Францин суверенитетне хытă хĕсесси патне илсе пырать. Вăл правительствăна Совет Союзĕпе калаçусем ирттерес тĕлĕшпе мĕнпур майсене шырама чĕнсе каланă. Прогрессивлă республиканецсен союзĕн членĕ Жильбер де Шамбрэн тата ыттисем те «Европа çарĕн» проектне хирĕç тухса каланă.

Францин Наци пухăвĕнче хальхи вăхăтра тавлашусем пынă вăхăтра парламент ушкăнĕсем те пуху тулашĕнче хĕрсех ĕçлеççĕ.

«Либерасьон» хаçат çапла çырать: ĕнер правительство пуçлăхĕ Ланьель министрсемпе—де Голль ушкăнĕн членĕсем пулнă çынсемпе—чылай вăхăт хушши калаçнă. Наци пухăвĕ вĕсем майлă пулмасан, министрсен правительствăпа «çыхăнма пăрахмалла мар», тесе ĕнентерме тăрăшнă Ланьель.

Малăрах пĕлтернĕ тăрăх, министрсем çакăн пек требовани лартаççĕ: Франци правительстви Гаага хулинчи тата Бермуд утравĕсем çинчи канашлусенче нимĕнле обязательство та ан илтĕр. Мĕншĕн тесен «хальхи правительство вăхăтлăх правительство пулса тăрать» (президента суйланă хыççăн правительство улшăнмалла.—Ред.).

«Либерасьон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Ланьель министрсене ĕнентерме пултарайман, çавăнпа ĕнтĕ правительствăри ларутăру малтанхи пекех йывăр пулса юлать.

Кенири террор

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англи влаçĕсем Кенире чрезвычайнăй лару-тăру туса хунăранпа çулталăк иртнĕ. Чрезвычайнăй лару-тăру туса хунă сăлтавпа Англи влаçĕсем наци тĕлĕшĕнчен ирĕке тухассишĕн кĕрешекенсене асаплантарассине вăйлатнă.

Колонисен министрĕ Литтлтон йышăннă тăрăх, çак вăхăт хушшинче Кенире тăватă пин ытла негра вĕлернĕ тата амантнă, 140 пин çынна яхăн арестленĕ тата «тĕрĕсленĕ». «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, 250.000 негра хăйсем пурăнакан вырăнсенчен кăларса резервацисене (вĕсем валли уйăрнă районсене) янă. Негрсен çурчĕсене çунтарса янă, пурлăхне çаратса пĕтернĕ, выльăх-чĕрлĕхĕсене хăваласа кайнă. Негрсен организацийĕсене, вăл шутра Кенири негрсен союзне, аркатса тăкнă, вĕсен руководителĕсене тĕрмене хупнă.

Кенирен çар лагерĕ туса хунă. Çĕршыва Англин чи лайăх çар чаçĕсене куçарнă, вăл çар чаçĕсене салтаксем килсех тăраççĕ. Нумаях пулмасть Найробие Англирен 70-мĕш бригада пынă, иртнĕ эрнере пĕрремĕш пехотнăй бригада тата «Линкольн» йышши 4 моторлă бомбардировщиксем пырса çитнĕ.

Англи авиацийĕ Кенири сăртлă-туллă районсем çине бомбăсем пăрахать, çарсемпе полици отрячĕсем негрсем пурăнакан районсенче карательнăй экспедицисем туса ирттереççĕ.

Колонисен министрĕ Литтлтон каланă тăрăх, чрезвычайнăй лару-тăру туса хунăранпа 55 пин ытла негра суда панă. Вуншар пин негр хăйсене суд тăвасса кĕтеççĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 17-мĕшĕнче Найробире çĕнĕ чрезвычайнăй постановлени пичетлесе кăларнă. Çав постановлени тăрăх, влаçсем «терроорла ĕç тунă» тесе айăпласа кирек хăш негра та асаплантарса вĕлерме пултараççĕ.

Анчах, хаяр террор ирттереççĕ пулин те, Англи влаçĕсем Кенире наци тĕлĕшĕнчен ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕве чарса лартма пултараймаççĕ. «Таймс» хаçатăн çак кунсенче çакна йышăнма тивнĕ: «Англи çарĕсен Кенире тата мĕн чухлĕ вăхăт хушши тăма кирлине пĕлме май çук».

Америкăпа Пакистан хушшинчи çар союзне хирĕç

ДЕЛИ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, США-па Пакистан хушшинче çар союзĕ тăвас шутпа Вашингтонпа Карачире темиçе эрне хушши ĕнтĕ калаçусем пыраççĕ. Америкăри хаçатсем, калаçусем çинчен çырса, США кун пек союз тăвассипе интересленнине кăтартса параççĕ. Вăл союз Пакистан территорийĕ çинче Америкăн çар базисене тума май парать. «Нью-Йорк геральд трибун» хаçат çапла çырать: США Пакистан çарне хĕçпăшаллантарать пулсан, Пакистан авиаци базисем парас ыйту тăрăх калаçусем ирттерме килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсем Америкăпа Пакистан хушшинче пыракан калаçусем пирки хытă шикленеççĕ. Пакистанпа килĕшÿ туса, тесе çыраççĕ Индири хаçатсем, США «Индие хĕсме хăтланать».

Бирмăри «Нью таймс оф Бирма» хаçат «США-н Пакистанри базисем» ятлă статьяра çапла çырать: Пакистан США-па çар союзĕ туса пĕрлешме хăтланнă пирки хурланнине палăртас пулать. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çар базисем тăвасси çинчен калаçусем пыраççĕ. Çак план пурнăçа кĕрсен, Азире йывăр лару-тăрăвăн çĕнĕ вучахĕсем пулса тăрĕç.

Неру çакăн пек каланă пулнă: кун пек союз тăвас ĕç çине Инди лăпкăн «пăхма пултараймасть», çак союз хыççăн «сивĕ вăрçă Инди умне тухса тăрĕ», тенĕ. Неру çавăн пек калани çинчен асăнса. хаçат çапла çырать: Америка базисене туни Пакистанпа мĕнпур Ази умĕнче тăракан кăткăс ыйтусене пиеплемайпа та татса параймĕ. Пакистан çак плансене пуçламăшĕнчех чарса лартсан аван пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен çак плансем Пакистанпа Инди хушшинчи çыхăнусене хăратса тăраççĕ. Пакистан çакăн пек авантюра тăвас çул çине тăрсан (урăхла каласан, Пĕрлешÿллĕ Штатсене базăсем тума ирĕк пама килĕшсен. — Ред.), Кашмир ыйтăвне, ахаль те кăткăс ыйтăва татса парас пирки иккĕленме тивет.

Америка Пакистанри çар базисем «Вăтам Хĕвелтухăçне хÿтĕлеме кирлĕ» тесе каланă пирки асăнса, хаçат: Пакистана никам та хăратмасть, тесе паллă тăвать. Хаçат юлашкинчен çапла çырать: пĕртенпĕр вывод патне пырса тухма пулать. Вăл вывод çакăн пек: Вашингтон Совет Союзĕпе Китая мĕнпур енчен сывлăш-çар тата тинĕс-çар базисемпе хупăрласа илесшĕн. Пакистан вара Вашингтон аллинчи пешка кăна пулса тăрать.

Президент суйлавĕ хыççăн

ШАНХАЙ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Филиппинри суйлав результачĕсем çинчен çырса, хĕвеланăç çĕршывсенчи хаçатсем çакна паллă тăваççĕ: çĕнĕ президент Магсайсай Америка уйăрса лартнă çын пулса тăрать.

Суйлав хыççăнах Магсайсай «канас» шутпа Америкăн Филиппинри тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕн Крузен контр-адмиралăн яхти çинче виçĕ кунлăха ишсе çÿреме тухса кайнă. Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, яхта çинчен радиопа сăмах каласа, Магсайсай çапла пĕлтернĕ: вăл США-на Лăпкă океан блокне тума «пулăшĕ». Çак тĕллевпе Магсайсай, ют çĕршывсенчи агентствăсем пĕлтернĕ тăрăх, çитес вăхăтра Инçет Хĕвелтухăçĕнчи тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсене, чи малтанах Тайвань утравĕпе Индо-Китая çитсе курма шутлать.

Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хăйне президент пулма суйланă хыççăнах, Магсайсай çапла пĕлтернĕ: унăн правительстви Инçет Хĕвелтухăçĕнчи «коллективлă хăрушсăрлăхăн» (агентство Лăпкă океан тăрăхĕнчи çар блокне çапла ят панă) политикине тытса пырĕ, тенĕ.

Халĕ Магсайсай тата унăн сывăх çыннисем США-н вице-президентне Никсона кĕтсе илме хатĕрленеççĕ Никсон çитес кунсенче Филиппина пырса çитмелле.

Магсайсай правительстви çĕршыври наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма хирĕç кĕрешессине вăйлатма шутлать. Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Магсайсай радиопа сăмах каланă чухне çакна паллă тунă: Филиппинри наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çара путарас тесе, эпĕ хамăн мĕнпур вăй-хала парăп, тенĕ.

Америкăри «Ньюсуик» журнал корреспонденчĕпе калаçнă чухне Магсайсай çапла пĕлтернĕ: «Хальхи вăхăтра лару-тăру йывăр пулнă пирки, США-н çарпа экономикăлла пулăшăвĕ пире малашне те кирлĕ пулать». Ют çĕршывсенчи капиталистсен ĕçне «тĕрĕс мар пÿлсе тăнине» пĕтерсе, Америкăна Филиппинра капитал хывассине ÿстерме хăй енчен пулăшса пыма пулни çинчен каланă вăл.

ФИНЛЯНДИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Паян республика президенчĕ Паасикиви Финлянди правительствин çĕнĕ составне çирĕплетнĕ. Правительствăна Финлянди банкĕн главнăй директорĕ Туомиоя йĕркеленĕ. Правительствăна çаксем кĕреççĕ:

Премьер-министр—Сакари Туомиоя, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Ральф Тернгрен, оборона министрĕ—П. Хетемяки, юстици министрĕ—Рейно Куускоски, шалти ĕçсен министрĕ—Х. Каннисто тата ыттисем те.

Паян çĕнĕ правительствăн пĕррремĕш ларăвĕ пулать, Унта правительство программине йышăнаççĕ.

Кашни киле—хаçат-журнал!

Иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илмен

Етĕрне районĕнче иртнĕ çул хаçат-журнал сарас енĕпе начар ĕçленĕ. Кăçал та çак ĕç йĕркеллĕ пымасть-ха. 1954 çулта илсе тăма хаçат-журнал çырăнтарма пуçланă хыççăн пĕр уйăх иртрĕ. Çак вăхăтра «Советская Чувашия» хаçата 360 экземпляр çеç çырăнтарнă. Вĕсене те уйрăм çынсем мар, учрежденисемпе организацисем çырăнса илнĕ

Районти чылай организацисемпе учрежденисем хаçат-журнал çырăнса илес ĕçе вăраха тăсса пыраççĕ. Райсовет исполкомĕн культура пайĕ, прокуратура, халăх сучĕсем, райпотребсоюз тата ытти хăшпĕр учрежденисемпе организацисем çак вăхăта çитсе те хаçат-журнал çырăнман. Çак асăннă учрежденисен руководителĕсем, хаçат-журнал сарас ĕçе тивĕçлипе хутшăнас вырăнне, «вăхăт пурха, ĕлкĕрĕпĕр» тесе хăйсем валли те подписка йĕркелеме васкамаççĕ.

Районта чăвашла тухакан хаçатсемпе журналсене сарасси уйрăммăнах начар пырать. Малтанхи уйăхра «Коммунизм ялавĕ» 105 экземпляр, «Çамрăк коммунист» 65 экземпляр кăна çырăнтарнă. «Ялав», «Тăван Атăл» тата «Агитатор блокночĕ» çырăнтарас ĕç те япăх пырать.

Халĕ районти чылай учрежденисенче чăвашла хаçатсене тупса вулама çук. Культура пайĕ иртнĕ çул чăвашла пĕр хаçатпа журнал та çырăнса илмен. Райсовет исполкомĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçата 2 экземпляр çеç çырăннă. Государствăн лаша витинче ĕçлекенсенчен çурри ытла чăвашсем пулин те, унти культурăпа сутĕç учрежденисенче чăвашла хаçатсем çук. Çитес çул валли те çырăнса илмен.

Районта тухса тăракан «Коммунист» хаçата 1.250 экземпляр вырăнне 340 экземпляр кăна сарнă.

Мĕншĕн-ха районта хаçат-журнал сарас ĕç вăраха тăсăлса пырать?

Ку енĕпе районта нимĕн те туман теме çук. Районти почтальонсемпе почта уйрăмĕсен работникĕсен канашлăвĕсене икĕ хут ирттернĕ. Юлашки канашлура районти культурăпа сутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, партипе комсомол райкомĕсен, районти хаçат редакцин представителĕсем те пулнă. Подписка йышăнма 34 пункт уçнă. Обществăлла организаторсем 100 çын ытла шутланаççĕ. Клубсемпе вулав çурчĕсен, библиотекăсен заведующийĕсене подписка йышăнма хутшăнтарма палăртнă. Çапах та ĕç çителĕксĕр пырать. Çыхăну кантурĕпе Союзпечать работникĕсем ялсенче хаçат-журнал сарас ĕç мĕнле пынипе куллен интересленмеççĕ, почтальонсемпе подписка йышăнма уçнă пунктсенчи юлташсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ чылай çĕрте хаçат-журнал çырăнтарма тытăнманпа пĕрех. Кăташ ялĕнче 160 кил ытла. Кунта ĕççыннисенчен подписка йышăнма ялти клуб заведующине Токарев юлташа хушнă. Вăл пĕтĕмпе те икĕ экземпляр хаçат çырăнтарнă. Клуб час-часах хупă тăрать. Хаçат-журнал çырăнма пыракансем каялла çаврăнса каяççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсенех Алексеевка, Пушнар, Чаганар, Мучар тата ытти нумай ялсенче курма пулать. Мучар ялĕнчи обществăлла организатор Захаров, Чаганарти обществăлла организатор Швецов юлташсем ĕççыннисенчен пĕр хаçат илме те подписка йышăнман.

Иртнĕ çул районта ялхуçалăх журналĕсене тата çамрăксен хаçачĕсене сарасси япăх иртнĕ. Кăçал çак çитменлĕхе пĕтерме районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн тата ВЛКСМ райкомĕн ĕçе халех хутшăнмалла. Анчах вĕсем хаçат-журнал сарас ĕç колхозсемпе комсомол организацисенче мĕнле пынипе интересленмеççĕ.

1954 çулшăн хаçат-журнал сарасси япăх пынин тĕп сăлтавĕ—çак ĕçе пуçламăш парторганизацисем тивĕçлипе хутшăнманни. Питех те пысăк ыйтăва нумай çĕрте парти пухăвĕсенче сÿтсе явман, ĕççыннисем хушшинче массăлла ĕçе туса пымаççĕ, хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе ĕçлекенсем хăйсен ĕçне мĕнле туса пынине контроллесе тăмаççĕ.

КПСС Етĕрне райкомĕн ĕççыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕçе лайăхлатас тата ку ĕçе лайăх ирттерес тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Н. ЦВЕТКОВ.
(Хамăр корр.).

Пурте çырăнаççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăнти çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем пурте çĕнĕ çулта хаçат-журнал илсе тăма çырăнчĕç. Вĕсем пурте тенĕ пек çулталăклăха çырăннă. Çĕнĕ çултан пуçласа техничкăра ĕçлекен З. Иванова, Н. Семенова, А. Никанорова юлташсем те хаçат илсе тăма пуçлаççĕ.

Çак кунсенче класс руководителĕсем вĕренекенсем хушшинче çамрăксен хаçачĕсене сарас ыйтупа калаçусем ирттереççĕ. Вĕренекенсем нумайăшĕ çитес çулшăн хаçат-журнал çырăннă.

Учительсем колхозниксем хушшинче хаçат-журнал сарас тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. ЕГОРОВ.

СĔНТĔР. Шалти ĕçсен министерствин районти уйрăмĕ çумĕнчи пуçламăш парторганизаци уçă пухăвĕнче хаçат-журнал сарасси çинчен сÿтсе яврăмăр. Хаçат-журнал сарма обществăлла уполномоченнăй пулма М. Васильев коммуниста уйăртăмăр.

М. Васильев юлташ пуçламăш парторганизаци хушнă ĕçе тăрăшса пурнăçларĕ. Вăл коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тăман работниксем хушшинче 45 экземпляр хаçат-журнал сарчĕ. Хаçат-журнала пурте пĕрер çулталăклăха çырăнчĕç.

М ИСАЕВ,
пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Суд

ТИВĔÇЛИПЕ ОТВЕТ ТЫТТАРНĂ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кив Ирчемес ялĕнчи И. Алексеевăпа В. Капралов, иккĕшĕ те темиçе хутчен судпа айăпланăскерсем, çăмăл майпа пурăнма шут тытнă. Вĕсем кăçалхи августăн 21-мĕшĕнче «Коллективист» колхозăн вăкăрне Етĕрнери райпотребсоюз заготконторине сутнă, укçине иккĕшĕ валеçсе илнĕ.

Çак ĕçе Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 2-мĕш участокри халăх сучĕ пăхса тухрĕ. Алексеевăпа Капралова 18-шар çуллăха хупса усрамалла, унтан тухсан тăватă çул хушши сасă прависĕр хăвармалла тата вăкăр хакне шыраса илмелле тунă.

М. МИКУШКИН.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—ноябрĕн 20-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Виçĕ туй».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 20-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль «Враги».

16 сехет те 15 минутра тата 20 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—пĕррремĕш сери. 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче

„СЕРЕБРИСТАЯ ПЫЛЬ"

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ

Сценари авторĕсем — А. Якобсон, А. Филимонов.
Фильма лартаканĕ—РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла премин лауреачĕ А. Ромм.
Режиссер—Латви ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ П. Арманд.
Композитор — Сталинла премин лауреачĕ М. Чулаки.

РОЛЬСЕНЕ ВЫЛЯНА АРТИСТСЕМ:

М. Болдуман, С. Пилявская, Н. Тимофеев, А. Ханов, В. Белокуров, Р. Платт, Л. Смирнова, О. Абдулов, Г. Юдин т. ыт. те.
Фильма Ленин орденлĕ «Мосфильм» киностудийĕ 1953 çулта ÿкернĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары ул Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54. çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09650 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР, Заказ № 2689. Тираж 20.000 экз.